# Çĕнĕ 2014 çулпа саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

98 (8164) № * Шăмат кун, 2013 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Пурте пĕрле – Çĕнĕ çул уявĕнче

***Муркаш варринчи капăр чăрăш тавра ĕнер районти кашни шкултанах Хĕл Мучисемпе Юр Пикесем чылайăшĕн пухăнчĕç – шучĕ те çук. Çĕнĕ çулхи хаваслă юрă-кĕвĕ илтсе, вăйă-ташă курса иртен-çӳрен те чарăнса тăмасăр чăтаймарĕ. Пурте пĕр-пĕрне çывхарса килекен уявпа саламларĕç.***

***Шкулсенче, ача сачĕсенче, культура учрежденийĕсенче – Çĕнĕ çул уявĕсен хĕрӳ вăхăчĕ. Январĕн 7-мĕшĕнче вара Владимирски Турă Амăшĕн турăшĕн Муркашри православи прихучĕ тата район администрацийĕ Муркаш райповĕ пулăшнипе ачасене Иисус Христос çуралнă кун ячĕпе иртterекен елкăна йыхравлать. Уяв район администрацийĕн ЗАГС пайĕн залĕнче 14 сехетре пуçланать.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**



## Раççей Президенчĕ саламланă

Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева Çĕнĕ çул тата Раштав ячĕпе саламланă.

«Çутă та кĕтнĕ çак уявсем пире пĕрлехи шанчăкпа, ĕмĕтсемпе тата ăнтăлупа пĕрлештерессĕ. Телейпе асамлăх сывлăшне кӳрессĕ. Çĕнĕ çул ырă хыпарсем илсе килтĕр, пултарулă та мирлĕ ĕç савăнăçĕпе тулли пултăр – çакна чун-чĕререн шанатăп. Палăртса хуни пĕтĕмпех пурнăçлантăр. Сире çитĕнӳсем, сывлăх тата ыррине кăна сунатăп», – тенĕ саламра.

## Чи лайăххисен шутĕнче

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев декабрĕн 26-мĕшĕнче «Чăваш Республикин патшалăхăн чи лайăх служащийĕ» тата «Чăваш Республикин муниципалитетăн чи лайăх служащийĕ» конкурссен çĕнтерӳçисене чысланă. Район (хула) округĕсен муниципалитет служащийĕсен конкурсĕн çĕнтерӳçисен хушшинче Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова та пур. Лилия Юрьевнăна çав ятпа саламланă май малашнехи ĕçре те ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Пенсионерсене пĕлме**

## Хăш кун илĕпĕр?

Банксенче пенсисене январь уйăхĕшĕн пенсионерсен счечĕсем çине Çĕнĕ çулччен куçарса парĕç. Почтăра вара пенсисемпе январĕн 3-мĕшĕнчен тытăнса сыхăну уйрăмĕсен ĕç графикне кура тивĕçтерме тытăнĕç.

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ январь уйăхĕнче пĕтĕмпе тӳлемелли пенси укçи-тенкине банксене 2013 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче куçарса парать. Тепĕр кунне вĕсем пенсионерсен счечĕсем çине куçмалла. Ĕçпе тивĕçтерекен служба сĕнĕвĕпе пенсие маларах тухнисен пенси укçи 2014 çулхи январĕн 3 – 14-мĕшĕсенче куçмалла.

Почта кану кунĕсене шута илсе пенсие çак графикпа çитерсе парĕ:

январĕн 3-мĕшĕнче – январĕн 3 тата 4-мĕшĕсемшĕн;

январĕн 4-мĕшĕнче – январĕн 5, 6 тата 7-мĕшĕсемшĕн;

январĕн 8-мĕшĕнчен тытăнса – яланхи графикпа.

**Уяв кунĕсем**

## Çĕнĕ çул уявĕн мероприятийĕсем

**Раштавăн 30-мĕшĕ.** Муркашри культурăпа кану центрĕнче 20 сехетре бал-маскарад пуçланать.

**Раштавăн 30 – 31-мĕшĕсем.** Районти Культура çурчĕсемпе ял клубĕсенче, информаци культура центрĕсенче бал-маскарадсемпе Çĕнĕ çул елкисем иртесçĕ.

**Кăрлачăн 2-мĕшĕ.** 11 сехет те 30 минутран пуçласа 13 сехетчен «Сывлăх» ФСК умĕнче çĕнĕ çул уявĕ пулать.

**Кăрлачăн 3-мĕшĕ.** Муркашри вăтам шкулта районти шкул ачисен шашка-шахмат турнирĕ иртет.

**Кăрлачăн 4-мĕшĕ.** Муркашри культурăпа кану центрĕнче 20 сехетре дискотека пуçланать.

**Кăрлачăн 4 – 5-мĕшĕсем.** «Сывлăх» ФСК-ра «Раштав тĕл пулăвĕсем» хоккей турнирĕ иртет.

**Кăрлачăн 5-мĕшĕ.** «Сывлăх» ФСК-ра волейбол кубокĕ пулать.

**Кăрлачăн 5-мĕшĕ.** «Сывлăх» ФСК-ра штанга тĕртессипе ăмăртăва чĕнессĕ.

**Кăрлачăн 5-мĕшĕ.** «Сывлăх» ФСК-ра çемье командисем шывра ишессипе ăмăртаççĕ.

**Кăрлачăн 6-мĕшĕ.** «Сывлăх» ФСК-ра районти вырăнти самоуправлени ĕçченĕсен спартакиади пулать.

**Кăрлачăн 5 – 6 – 8-**мĕшĕсем. Ачасен районти тĕп библиотекинче «Асамлă Раштав» вулавсем, ребуссемпе кроссвордсен тата тупмалли юмахсен кунĕсем, Çĕнĕ çул тата Раштав ячĕпе литература калейдоскопĕ иртесçĕ.

**Кăрлачăн 7-мĕшĕ.** Муркашри культурăпа кану центрĕнче 20 сехетре «Раштав çăлтăрĕсем» дискотека пулать.

**Кăрлачăн 9 – 10-мĕшĕсем.** «Сывлăх» ФСК-ра 9-мĕш класра вĕренекенсен командисем Çамрăксен парламенчĕн Кубокĕшĕн волейболла выляççĕ.

**Кăрлачăн 10-мĕшĕ.** Тури чăвашсен музейĕ халăх йăли-йĕркипе Раштав каçне лармана чĕнет.

## Çапла ĕçлеççĕ тата канаççĕ

***Çулталăкри тĕп уяв – Çĕнĕ çул çитсе килет. Районти ытларах предприятисемпе организацисем уяв кунĕсенче çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕшĕччен канаççĕ. Январĕн 9-мĕшĕ – ĕç кунĕ. Хăш-пĕр предприятисемпе учреждениесем вара уяв кунĕсенче уйрăм йĕркепе ĕçлеççĕ. Ку вăл çынсен ытăвĕсене тивĕçтерессипе, вĕсене меллĕрех майсем туса парассипе çыхăннă.***

**Муркаш почтамчĕпе унăн уйрăмĕсем.** Яланхи ĕç режимĕпе ĕçлеççĕ. Кану кунĕсем – январĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕ тата 7-мĕшĕ. Ытти кунсенче клиентсене яланхи йĕркепех йышăнаççĕ.

**Раççей Перекет банкĕн районти уйрăмĕ.** Кану кунĕсем – январĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕ, 4-мĕшĕпе 5-мĕшĕ тата 7-мĕшĕ. Январĕн 3-мĕшĕнче, 6-мĕшĕнче тата 8-мĕшĕнче банк уйрăмĕ ĕçлет. Çав кунсенче ĕç кунĕ 9 сехетрен тытăнса 16 сехетчен тăсăлать, банк уйрăмĕ кăнтăр апачĕсĕр ĕçлет.

**«Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисĕ.** Январĕн 1, 2, 3-мĕшĕсем тата 5-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕшĕччен – кану кунĕсем. Январĕн 4-мĕшĕнче хушма офис клиентсене йышăнать. Январĕн 9-мĕшĕнчен тытăнса – яланхи йĕркепе.

**Районăн тĕп больници.** Декабрĕн 31-мĕшĕнче – кĕскетнĕ кун йĕрки. Январĕн 1–2, 5, 7–8-мĕшĕсем – кану кунĕсем. Апла пулин те поликлиникăра васкавлă пулăшупа 8 сехетрен тытăнса 14 сехетчен тивĕçтерессĕ.

Январĕн 3–4, 6-мĕшĕсенче шăмат кун графикĕпе ĕçлет (планланă стационар пулăшăвĕпе графикпа килĕшӳллĕн тивĕçтерессĕ). Поликлиникăра васкавлă пулăшупа 8 сехетрен тытăнса 14 сехетчен усă курма май пулĕ.

**Район администрацийĕн ЗАГС пайĕ.** Январĕн 1 – 2-мĕшĕсем, 4 – 5-мĕшĕсем тата 7-мĕшĕ – кану кунĕсем. Январĕн 3, 6 тата 8-мĕшĕсенче ЗАГС пайĕ 9 сехетрен тытăнса 15 сехетчен ĕçлет.

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Çĕнĕ 2014 çул тата Христос çуралнă кун ячĕпе сире пĕтĕм чĕререн саламлатăп!

Иртсе каякан 2013 çул республикăшăн çăмăллах мар, çапах та пĕтĕмĕшле ăнăçлă çулталăк пулчĕ. Пирĕн пĕрлехи ĕç-хĕле тĕрлĕ шайра чи пысăк хак пачĕç. Пирĕн мухтанмалли çук мар!

Чăваш Енре хальхи тăватă предприяти хута янă, пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсем çĕршер йĕркеленĕ. Строительство комплексĕ ăнăçлă ĕçлесе пынипе пурăнмалли çурт-йĕр хута ярассипе Атăлçи федераци округĕнче хамăрăн малти позицисене сыхласа хăварма пултартăмăр. Хресченсем акса-лартса ӳстернĕ тухăçа пĕтĕмпех пуçха кĕртессишĕн ырми-канми вăй хучĕç. Сывлăха сыхлассине модернизацилессин программи ăнăçлă пурнăçа кĕчĕ. «Газпром» ОАО Атăл тепĕр енне газификацилеме 500 млн. тенкĕ ытла хывать.

Пирĕн тĕп пуянлăх, малашлăх – ачасем. Эпир çĕнĕ 11 ача сачĕ хута ятăмăр, шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче 6,5 пине яхăн вырăн йĕркелерĕмĕр. 3 çултан тытăнса 7 çулчченхи ачасен ача сачĕсенчи черетне пĕтертĕмĕр.

Республика физкультурăпа спортри çитĕнӳсемшĕн «Раççей регионĕ» номинацире наци премине тивĕçрĕ. Чăваш Ен 2015 çулта çăмăл атлетикăпа Европа чемпионачĕн, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утассипе тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсене ирттерме правăна çĕнсе илме пултарчĕ.

Хисеплĕ юлташсем!

Раççейре 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе палăртнă. Культура несĕллĕхне, пирĕн ĕçчен те ăшă кăмăллă халăхăн традицийĕсемпе йăли-йĕркине сыхласа хăварнинчен Чăваш Енĕн малашлăхĕ килет.

Пурçăра та сире çирĕп сывлăх, телей, юрату сунатăп! Кашни çемьере, кашни килте çителĕклĕх, ăнăçу тата килĕшӳ хуçаланччăр!

Уяв ячĕпе сире! Çĕнĕ 2014 çул ячĕпе!

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Çитсе килекен çĕнĕ 2014 çул тата Раштав ячĕпе уяв саламне йышăнса илсемĕр!

Çĕнĕ çул сирĕншĕн ăнăçуллă та ӳсĕмлĕ, ытларах ырă ĕçсемпе асра юлмалли çулталăк пултăр. Сирĕн кулленхи пурнăçра пысăк улшăнусем кăна пулччăр.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, телей, çемье ăшши, юрату тата ăнăçу, уяв кăмăл-туйăмĕ сунатпăр, шухăшланă ĕмĕт-тĕллевсем çĕнĕ çулта пĕтĕмпех пурнăçланччăр.

**Николай ВАНЕРКИН, Владимир МИДУКОВ,**
**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем.**

**КАШНИ ВУЛАКАНА САЛАМЛАТПĂР!**

Çывхарса килекен çĕнĕ 2014 çулпа чи малтан районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене саламлатпăр! Пурне те çирĕп сывлăх, телей, килĕшӳпе тату пурнăç сунатпăр!

Райхаçата килĕрен валеçекен почта ĕçченĕсене те пĕтĕм кăмăлтан уявпа саламлатпăр! Ырми-канми ĕçченлĕхшĕн тав тăватпăр.

Район ертӳçисене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçченĕсене, мĕн пур шайри депутатсене, ертӳçĕсене 2014 çулпа хĕрӳллĕн саламлатпăр! Тăван халăхшăн вăй хурас ĕçре ăнăçу сунатпăр.

Вăрçă тата ĕç ветеранĕсене уявпа саламласа вăрăм ĕмĕр сунатпăр!

Çĕнĕ çул пуриншĕн те ăнăçлă та телейлĕ пултăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ.**

**РАЙОНТИ ÇĔР ĔÇĔПЕ ПРОДУКЦИ ТИРПЕЙЛЕКЕН ПРОМЫШЛЕННОÇ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Эсир тата сирĕн тĕслĕхпе паян çак сферăра ырми-канми вăй хуракансем! Сирĕн опытпа, вĕрентĕвĕрпе, тăрăшулăхăрпа тата ырă пуçарăвăрпа район çулсерен ӳсĕм çулĕпе ĕçлеме тăрăшать, малашлăха палăртать. Сире пурсăра та АПК ветеранĕсен районти канашĕ енчен Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп. Çитес çул та эсир сывлăхлă пулса çĕнĕ ĕмĕтсем пурнăça кĕртессе шанса тăратăп.

**В. ВЯЗОВ,**
**АПК ветеранĕсен районти канашĕн председателĕ.**

**Уважаемые жители Моргаушского района!**
**ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» поздравляет Вас с наступающим 2014 годом и Рождеством Христовым!**

Подбирается к своему завершению 2013 год, и по традиции пора подводить итоги, строить новые планы на будущее. Уходящий год выдался неоднозначным: для кого-то он запомнился множеством ярких событий и впечатлений, кому-то преподнес неожиданные сюрпризы и трудности.

Однако, об одном можно судить точно, год этот прошел не зря: он прибавил нам мудрости, сделал опытнее и сильнее. Впереди – новая страница. Зачастую Новый год связывают с надеждами на лучшее, а потому пусть все хорошее, что радовало вас в уходящем году, обязательно найдет свое продолжение в году наступающем.

Пусть 2014 год будет для вас богатым на хорошие события и положительные эмоции, принесет удачу, стабильность и процветание.

Желаем вам семейного тепла и уюта, надежных друзей и хороших новостей, и конечно же, крепкого здоровья!

**С уважением генеральный директор ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» И. КЛЕМЕНТЬЕВА.**



# Малашне те пур ĕçе те халăхпа пĕрлех пурнăçласчĕ

**– Ростислав Николаевич, 2013 çул вĕçленсе пырать. Мĕнпе асра юлчĕ çак çул Сирĕншĕн хăвăршăн? Тата мĕнпе паллă пулса юлчĕ вăл районшăн?**

– Çулталăк пĕтĕмĕшле ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ. Çăмăлах пулчĕ тесех калас килмест ăна. Апла пулин те депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсемпе, хуçалăхсен, предприятисемпе организацисен, учреждениесен ертӳçисемпе, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, район администрацийĕн коллективĕпе пĕрле ума лартнă тĕллевсене пурнăçлас тесе тăрăшрăмăр. Хамăрăн ĕçре РФ Президенчĕн Владимир Путинăн Федераллă Пухăва, ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕсене, çавăн пекех РФ Президенчĕн 2012 çулхи май уйăхĕнчи Указĕсене пурнăçа кĕртес тесе тимлерĕмĕр. Тăрăшни сая каймарĕ. Çитĕнӳсем те пулмарĕç мар.

Иртнĕ çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн район Чăваш Республикинчи муниципаллă районсем хушшинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен халăхшăн тунă ĕç эффективлăхне палăртассипе ирттернĕ ăмăртура 2 вырăн йышăнчĕ. Çапла майпа района тепĕр хушма 2 млн. та 600 пин тенкĕ укçа уйăрчĕç. Çав ăмăртура республикăри ял тăрăхĕсем хушшинче Москакасси ял тăрăхĕ çĕнтерчĕ. Вĕсене те 600 пин тенкĕ ытларах укçа уйăрса пачĕç. Унччен маларах вара çулла района тепĕр ырă хыпар çитрĕ. Обществăлла финанссене йĕркеллĕ усă курассипе ирттернĕ Раççейри конкурсра пирĕн Муркаш районĕ 1 вырăн йышăнма пултарчĕ. Асăннă конкурсра пирĕн район иккĕмĕш хут çакăн пек сумлă вырăн йышăнать.

Районта 2013 çулта çĕнĕ объектсем те хута кайрĕç. Анчах та, шел пулин те, Муркашри 60 вырăнлăх ача садне яваплăха туйман подрядчика пула реконструкци хыççăн кăçал хута яраймарăмăр.

Пĕтĕмĕшле вара район паянхи куна йĕркеллĕ аталанса пырать. Çакна кашни отрасльтех кăтартусем иртнĕ çулхинчен пысăкраххи, халăхăн пурнăç шайĕ ӳсни, инвестици калăпăшĕ хăпарни кăтартса парать.

Район бюджечĕ (ял тăрăхĕсен бюджечĕпе пĕрле), тĕпрен илсен, пурнăçланчĕ темелле. Хамăр тăвакан тупăш планĕ 169,7 млн. тенкĕпе танлашать. Ку плана кăçал эпир ирттерсех тултаратпăр. 2013 çулта депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕсенче район бюджетне пысăклатас енĕпе 5 хутчен пăхса тухнă, çав шутра – республикăран 120 млн. тенкĕ тĕллевлĕ усă курмалли укçа-тенкĕ килнине пула.

**– Уйрăммăн кашни отрасле илес пулсан вĕсенчи ĕçе пĕтĕмлетсе мĕн каланă пулăттăр?**

– Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсемшĕн 2013 çул çăмăл пулмарĕ. Апла пулин те ял хуçалăх продукцине пурĕ 440 млн. тенкĕлĕх е иртнĕ çулхинчен 7 процент ытларах туса илтĕмĕр. Ял хуçалăх предприятийĕсенче майракаллă шултра выльăхсен йышĕ ӳсрĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхра сĕт блокне юсарĕç. Чкалов яч. хис. хуçалăхра сĕт пăрăхне вырнаçтарчĕç. Хуçалăхсем 21 ял хуçалăх техникине пурĕ 26 миллион тенкĕне яхăн суммăлăх туяннă. Çитес çул валли кĕрхи культурăсене иртнĕ çулхинчен нумайрах – пурĕ 5 пин га яхăн лаптăк çинче акса хăвартăмăр.

Кăçал çĕр хутшăнăвĕсенче йĕрке тăвассипе те чылай ĕç туса ирттертĕмĕр. Çапла майпа вырăнти бюджетăн харпăр хăй тăвакан тупăш пайне самаях ӳстерме май килчĕ: 2013 çулта муниципаллă харпăрлăхран илекен тупăш 2012 çулхинчен 4 хут хăпарчĕ. Арендăна илнĕ çĕр лаптăкĕсемшĕн аренда укçи тӳлессинче йĕрке тăвассипе нумай ĕç туса ирттернĕ. Ку ĕç малалла пырать.

Хуçисене кирлĕ мар пай çĕрĕсене ял тăрăхĕсен харпăрлăхне куçарассипе пирĕн район республикăра ку енĕпе чи лайăх ĕçлекен пилĕк район йышĕнче. Паянхи куна хуçисене кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсене пурĕ 1784 га лаптăк ял тăрăхĕсен харпăрлăхĕ çине куçарни çинчен калакан район сучĕн йышăнăвĕсем пур. Тата тепĕр 1213 пай çĕрне (пурĕ 1940 га) пай çĕрĕн хуçисем хăйсене кирлĕ мар тесе пĕлтерчĕç. Çапла майпа çак çĕрсене те ял тăрăхĕсен харпăрлăхне куçарнă.

Нумай ачаллă çемьесене çĕрпе тивĕçтерессипе ăнăçлă ĕçлерĕмĕр. Черете тăнă 107 нумай ачаллă çемьерен 61-ĕшне çĕр панă. Паянхи куна нумай ачаллă çемьесене çĕр пама пĕтĕмпе районта 153 çĕр лаптăкĕ хатĕрленĕ. Çывăх вăхăтрах тата тепĕр 50 çĕр лаптăкне хатĕрлесе хуратпăр.

Промышленность предприятийĕсем те ăнăçлă аталанса пыраççĕ. 2013 çулта промышленность таварĕсене хăйсене кăна, ытти пулăшусене шутламасăр, пурĕ 1 млрд. та 975 млн. тенкĕлĕх туса кăларса сутнă е ку кăтарту 2012 çулхинчен 5 процент чухлĕ хăпарчĕ. Уйрăмах «Сеспель» предприяти ăнăçлă аталанса пырать. Кăçал кунта тата тепĕр çĕнĕ цех уçăлчĕ. Муркашри кирпĕч завочĕ проектпа палăртнă хăватпа ĕçлеме пуçласси патне çитни те – пысăк çитĕнӳ.

Суту-илӳ сфери те ăнăçлă аталанчĕ. Кунта Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тӳпи уйрăмах пысăк.

Çулталăкра кунта тавар çаврăнăш планне 1 млрд. та 100 млн. тенкĕлĕх е пĕлтĕрхинчен танлаштаруллă хакпа 3 процент ытларах пурнăçланă. Ку сферăра çĕнĕ объектсем çинеçинех уçăлчĕç. Муркаш райповĕ кăçал тĕплĕ юсав ĕçĕсем хыççăн «1000 вак-тĕвек» ятлă магазин, çавăн пекех «Три гурмана» тепĕр магазин тата «Бриз» ресторан уçрĕ.

Тӳлевлĕ пулăшусене те иртнĕ çулхинчен 15 процент ытларах – 207 млн. тенкĕлĕх панă.

Мăн Сĕнтĕрти çăкăр завочĕ çĕнĕ кăмака лартрĕ.

Сăмаха пĕчĕк тата вăтам педприятисем çине куçарнă май ку отрасль те ăнăçлă аталаннине палăртас килет. Мăн Сĕнтĕрте уйрăм предприниматель сĕтел-пукан сутмалли «Космос» магазин уçрĕ. Çавăн пекех «Ханты» ятпа магазин тата кафе хута кайрĕç. Муркашра «В трех шагах» магазин хăйĕн алăкĕсене уçрĕ. Малтанхи «Сельхозхими» территорийĕнче суту-илӳпе пулăшусем памалли центр хăпарчĕ. Унсăр пуçне Хунтăкассинче çĕнĕ магазин, Муркашра пластик чӳречесем тумалли цех, шăл юсамалли пӳлĕм уçăлчĕç. Кăçал 3 автозаправка хута кайрĕ: Юнкăпуç тĕлĕнче «Транзит–Сити» тата Муркашри юсавпа техника предприятийĕпе Е. Андреев хуçалăх территорийĕнче. Пирĕн районти предприниматель Етĕрне районĕнче «Созвездие» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра ачасен сывлăхне çирĕплетмелли лагерь уçрĕ. Çавăн пекех Катькас ял тăрăхĕнче мини-зоопарк уçăлчĕ.

Районта 14 муниципаллă программа пурнăçланать. Çав шутран халăхăн çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе те темиçе программа ĕçлет. «Çурт-йĕр» федераллă программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтерессиۥ» подпрограммипе килĕшӳллĕн районти 18 çамрăк çемье çĕнĕ хваттерлĕ пулчĕ е çурт лартма патшалăх пулăшăвне илчĕ. Çак тĕллевпе тĕрлĕ шайри бюджетран 11, 5 миллион тенкĕлĕх укçа уйăрса панă. «Ялсене 2013 çулччен социаллă аталантарасси» программăпа килĕшӳллĕн ялта пурăнакан 5 граждан тата 8 çамрăк специалист хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатрĕç. Пĕтĕмпе çакна валли 8,1 млн. тенкĕ укçа уйăрнă. Çавăн пекех ача амăшĕн капиталĕпе районта пурăнакан çемьесем çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатаççĕ. 700 яхăн çемье унпа шăпах çак тĕллевпе усă курнă. Унсăр пуçне кăçал 17 вăрçă ветеранĕпе тăлăх арăм çĕнĕ хваттерлĕ пулчĕç. Районта 2013 çулта пурĕ 29,37 пин тăв. м. çурт-йĕр тунă.

Çул-йĕре юсассипе вара çак ĕçсене туса ирттертĕмĕр. Мăн Сĕнтĕр – Ильинка çул хĕррипе çуран утакансем валли тротуар (1 км 857 м) турăмăр. «Волга – Вăрăмой» çула (547 метр ) юсарăмăр. Унсăр пуçне «Волга – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ» (3,5 км), «Элĕк – Ишек» (4795 м) çулсем çинче юсав ĕçĕсене тунă. Çавăн пекех Çурлатринче 1 км 26 метр тăршшĕ çула тума, «Муркаш – Турай – Сура» (13,3 км) çула юсама пуçларăмăр.

Пурĕ 2013 çулта 1130 млн. тенкĕлĕх инвестиципе усă курнă.

Район бюджечĕн 71 процентчĕ социаллă сферăна аталантарма каять. Республика Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Шомикра çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлчĕ. «Земство тухтăрĕ» программăпа района 17 врач килчĕ. «Сывлăх» наци проекчĕпе тата çак сферăна çĕнетмелли программăпа килĕшӳллĕн юлашки çулсенче района пурĕ 10 млн тенкĕлĕх çĕнĕ оборудовани килнĕ.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме те район бюджетĕнчен 15 млн. тенкĕ укçа уйăрнă. Çав шутран 4 шкула, 6 шкул столовăйне тĕпрен юсанă. Чуманкассинчи вăтам шкулпа ача садне хутса ăшăтма пĕчĕк котельнăйсем туса лартнă. Вĕсене çак эрнере хаваслă лару-тăрура хута ятăмăр.

Физкультурăпа спорта аталантарма та 4,5 млн. тенкĕ ытла укçа-тенкĕ уйăрнă.

Культура сферинче те ырă палăрăм пулчĕ. Мăн Сĕнтĕрте çĕнĕ информаципе культура центрĕ хута кайрĕ. «Юлашки çулсенче кун пекки республикăра пĕрре те пулман», – тесе палăртрĕç ăна уçнă чухне республикăран килнĕ хăнасем.

Районти ытти отрасльсем те кăçал ăнăçлă ĕçлерĕç. Кăтартусем пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах.

Çакна та каласа хăвармалла. Районти бюджет сферинчи уйрăм категорисене кĕрекен ĕçченсен ĕç укçине хăпартассине те районта пысăк тимлĕх уйăртăмăр. Ку ĕçсене пурнăçлама республикăран укçа уйăрчĕç. Çавăн пекех вырăнти бюджет укçипе те çителĕклĕ усă куртăмăр. Пурĕ 30 млн. тенкĕ укçа тухса кайрĕ çакна валли.

**– Çитес çултан мĕн кĕтетĕр? Умра мĕнле тĕллевсем?**

– Çитес çулхи район бюджетне йышăнтăмăр ĕнтĕ. Вăл 433,4 млн. тенкĕпе танлашать. Иртнĕ çулсемпе танлаштарсан çитес çулхи бюджет – программăллă бюджет. Çавна май пирĕн 2013 çул вĕçлениччен 14 программăна йышăнса хăвармалла. Вĕсем çитес çултан ĕçлеме пуçламалла. Пăхса хăварнă укçатенкĕн 95 процентчĕ ытла шăпах çав программăсене пурнăçлама каймалла.

Муркаш районĕ – ял хуçалăх районĕ. Çавăнпа та тухăçлă тыр-пул, çĕр улми, пахча çимĕç, сĕт, аш-какай туса илес ĕçре малта пыракан технологипе усă курмалла. Пушă ларакан ферма çурчĕсене усă курассипе тимлемелле. Çĕр хутшăнăвĕсемпе малалла ĕçлемелле. Çавăн пекех хуçасăр шутланакан объектсене, çав шутра шыв башнисене те ял тăрăхĕсен харпăрлăхне куçарассипе ĕçлемелле.

Çитес çул Мăн Сĕнтĕрте кивĕ çуртсенче пурăнакан çынсене 51 хваттерлĕ çурт туса унта куçармалла. Çитес çулах çак ялтах тăлăх ачасем валли 15 хваттерлĕ çурт туса лартатпăр. Нумай ачаллă 1 çемьене çуртпа тивĕçтермелле. Хатĕрленӳ ĕçĕсем пуçланнă. Çакна валли укçа-тенкĕне кăçалах уйăрнă ĕнтĕ. Ĕçсене çитес çул туса ирттеретпĕр. Москакассинче кăçал нумай хваттерлĕ çурт тума пуçланă. Çитес çул валли нумай хваттерлĕ çуртсем тума Муркашра та 3 çĕр лаптăкĕ хатĕрлесе хунă.

Халăха таса шывпа тивĕçтерессипе, çĕнĕ çуртсем, çулсем тăвас, юсас енĕпе малалла тимлемелле. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарас тесе тăрăшмалла. Районти туризма аталантармалла.

Çитес çул Муркашра лицей пулнă çуртра 60 вырăнлăх ача садне туса пĕтерсе хута ямалла. Москакасси шкулĕпе кунти ача сачĕ валли çĕнĕ модульлĕ котельнăйсем тумалла. Унсăр пуçне вĕренӳ учрежденийĕсене юсассипе малалла ĕçлемелле. 2014 çултан шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене модернизацилес программа ĕçлеме пуçлать. Çавăнпа та ку енĕпе нумай ĕç тума палăртнă.

Тойкилтĕре çĕнĕ ФАП туса лартмалла.

Çавăн пекех çитес çул пирĕн Муркаш районĕ 70 çул тултарать. Ăна та чыслăн хатĕрленсе ирттерме хатĕрленмелле.

**– Тен кун çинче тĕплĕнрех чарăнса тăратăр?**

– Районăн 70 çулхи юбилейне хатĕрленсе ирттерме ятарлă йĕркелӳ комитетне туса хунă. Ĕç планне те çирĕплетнĕ. Унта тĕрлĕрен конкурссем, фестивальсем, тематикăллă каçсем нумай кĕртнĕ. Унпа килĕшӳллĕн район 70 çул тултарнине халалланă мероприятсем районта пуçланнă ĕнтĕ. Юбилей çулталăкĕнче тĕрлĕрен професси çыннисен уявĕсене, ытти мероприятисене анлă ирттермелле. Вĕсенче çав сферăсенче ĕмĕрĕпех вăй хунă, халĕ те тăрăшса ĕçлекенсене халăхпа пĕрле чысламалла.

Пирĕн хамăрăн историе манмалла мар. Ăна çамрăк ăрăва парса хăварассишĕн тимлемелле. Çавăнпа та çитес çулталăк тăршшĕпех Муркаш районĕ, унăн маттур та пултаруллă çыннисем çинчен каласа паракан кĕнеке кăларма материалсем пуçтарассипе ĕçлес тесе тĕллев лартатпăр. Çавăн пекех пурнăç улшăннăçем район энциклопедине кĕртмелли событисемпе çынсем те хушăнсах пыраççĕ. Пирĕн районăн кĕске энциклопедине çĕнетессипе те ĕçлемелле.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнче туса хунă Обществăлла канаш ларăвĕнче кăçал ветерансем районта политика репрессине пула инкек тӳссе ирттернисене асăнса палăк лартас ыйтăва хускатнăччĕ. Ку ĕçе тытăннă, малалла тимлемелле. Паянхи куна палăкăн эскизĕ хатĕр. Унăн вырăнне те палăртнă: вăл районти тури чăвашсен музейĕн территорийĕнче пулĕ. Палăка лартма укçатенкĕ пуçтарас ĕç пуçланнă.

**– Ростислав Николаевич, Эсир район администрацийĕн пуçлăхĕ, çавăн пекех «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕн секретарĕ пулнă май Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн Федераллă Пухăва, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕсем çинчен Сирĕн шухăша пĕлес килет.**

– Асăннă Çырусенче халиччен мĕн тунине пĕтĕмлетнĕ, çитес çулхи задачăсене палăртнă. Халиччен мĕн туни йăлтах халăхшăн, халăха валли пурнăçланă ĕçсем. Вĕсем мĕнле курăмлă пулнине халăхăн пурнăç шайĕ ӳссе пыни те кăтартса парать. Малалла пирĕн ку енĕпе тата тăрăшарах ĕçлемелле.

Анчах çакна манмалла мар. Вырăнта йĕрке пултăр тесен çавăнта пурăнакансен хăйсен те айккинче тăрса юлмалла мар. Пирĕн проблемăсене пирĕн хамăрăнах татса памалла. Владимир Путин та çынсен гражданла активлăхне ӳстермелли çинчен калать хăйĕн Çырăвĕнче. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕ халăха чи çывăх звено пулнине палăртать. Çавăнпа та ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, ялсенче пурăнакансен пĕрле канашласа тумалла пур ĕçе те.

Кунта çакна каласа хăварас килет. Паян хăй тытăмлăх органĕсен питĕ нумай полномочи. Анчах та вĕсене туллин пурнăçлама полномочисемпе пĕрле вĕсене пурнăçлама май паракан укçа-тенкĕне уйăрман. Владимир Владимирович çак проблемăна асăрхани, ăна татса парассине шантарни питĕ савăнтарать, шанăç парать.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем мĕн туни – йăлтах халăх куçĕ умĕнче. Халăхран вăрттăн ĕç те, хыпар та çук пирĕн. Ку чăннипех те çапла пулмаллине Михаил Игнатьев та хăйĕн Çырăвĕнче палăртсах калать. Пĕтĕм ĕçе вырăнсенче эффективлăхпа мĕн туни йăлт куç умĕнче пулни çинче йĕркелемеллине палăртать. Çавна май обществăлла организацисен активлăхне те ӳстермелле пирĕн.

Владимир Владимирович çавăн пекех демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва ӳстерес тесен çынсен çурт-йĕр условийĕсене татса памалли çинчен калать. «Раççей çемйине – пурăнмалли çурт» программа ĕçлеме пуçлассине палăртать. Юлашки çулсенче ку енĕпе пирĕн район тĕрлĕрен программăна хутшăнса чылай çемьене пулăшни çинчен каларăм ĕнтĕ. Тепĕр çĕнĕ программа пурнăçланма пуçлани вара татах лайăх. Мĕншĕн тесен çуртйĕр условийĕсем пулсан, вырăнта ĕç пулсан пирĕн ялсем те малалла аталанĕç. Çамрăксем те яла ытларах юлĕç, ялсен малашлăхĕ пулĕ. Паян пур сферăра та специалистсем кирлĕ.

Ку çеç те мар, паян пирĕн районти арçынсем республика тулашне нумайăн ĕçлеме çӳреççĕ. Ку проблемăна республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та пысăк тимлĕх уйăрчĕ хăйĕн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче. Республикăра арçынсем валли ĕç вырăнĕ ытларах туса парассипе задачăсем лартать. Çакă çемьесем саланакан сăлтавсене чакарма та май парать.

2014 çул Культура çулталăкĕ пулать. РФ Президенчĕ Владимир Путин та, республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хăйсен Çырăвĕсенче нравственность, çемье хаклăхĕсене тĕпе хурса ĕçлемеллине палăртаççĕ. Пурнăçри нумай улшăну çынран хăйĕнчен килет. Çавăнпа та пирĕн чун-чĕрепе таса пулмалла. Палăртнă ĕçсем сахал мар. Кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче таса чун-чĕрепе, пĕр-пĕрне ăнланса тăрăшса ĕçлесен вĕсене пурнăçлатпăрах. Вара çемьесенче те йĕрке пулĕ, пурнăç шайĕ те хăпарсах пырĕ. Çырусенче палăртнă задачăсене пурнăçа кĕртес тесе куллен тимлемелле пирĕн.

**– Çĕнĕ çул çывхарса килет? Мĕн калас тетĕр район çыннисене?**

– Чи малтанах районта пурăнакансене пурне те тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăватăп. Кăçал мĕн туни – пирĕн пĕрлехи çитĕнӳ. Малашнехи тĕллевсем епле пурнăçланасси те пирĕнтен кашнинчен килет. Пĕр тĕллевпе ĕçлесчĕ малалла та. Пурсăра та çывхарса килекен Çĕнĕ çул тата Христос çуралнин праçникĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатăп пурне те. Çемйĕрсенче юрату, килĕшӳ пултăр яланах. Укçатенкĕ те çитсех пытăр. Çитес çул кăçалхинчен ăнăçлăрах та телейлĕрех килтĕр.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, тăхлачăна, пирĕн сывăх çыннăмăра – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Римма Евграфовна МАКАРОВĂНА** сумлă юбилейпа пĕтĕм чунчĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурри – телей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, хăтипе тăхлачи тата тăватă мăнукĕ.**



Эпир хамăрăн хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă пиччене – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валерий Порфирьевич МАРЯШКИНА** сумлă юбилейпа– 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çартан таврăннă хыççăн колхозра бригадирта, унтан колхозра 40 çул шоферта ĕçлерĕн. Тава тивĕçлĕ шофер-механизатор ят илме тивĕçлĕ пултăн. Пире пурне те вăй çитнĕ таран пулăшнăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, сана юрататпăр, эс пурришĕн санпа чунтан савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: Маряшкинсем, Романовсем, Крыловсем, Черновсем, кӳршĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Пиккикассинче пурăнакан хисеплĕрен те хисеплĕ **Зинаида Александровна ПРОКОПЬЕВĂНА** çуралнă кунĕ тата Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей сунатпăр. Çумра яланах шанчăклă туссем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: Жирновсемпе Сергеевсен çемйисем.**



Пирĕн юратнă хаклă аннене, асаннене – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Валентина Васильевна СИНИЧКИНĂНА** январĕн 5-мĕшĕнче 85 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху санăн юман пек çирĕп, кун-çулу юхан шыв пек вăрăм пултăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана вăрăм кун-çул парнелетĕр.

**Чунтан-чĕререн юратса ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Поздравляем **ПИНАРИНА Владимира Леонидовича** с 50-летием!

От всей души тебе желаем
Большого счастья и добра.
Желаем то, о чем мечтаешь,
О чем ты думаешь всегда.
Чтоб боль и горе не встречались,
Чтоб смех твой слышался всегда.
Желаем крепкого здоровья,
Улыбок, солнца и тепла!

**С наилучшими пожеланиями Ивановы, Васильевы и Шаланговы.**



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, йăмăка, аппана, пирĕн çывăх çыннăмăра – Турай ял тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче пурăнакан **Раиса Борисовна РОМАНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан мĕн пур ăшă та çепĕç туйăмсемпе саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр, сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурри – телей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 2 кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, аппăшĕн тата йăмăкĕсен çемйисем.**

Çĕр çинчи чи хаклă, юратнă аннене, мăшăра, тăванăма – Мăн Токшикра пурăнакан **Валентина Васильевна ЯКИМОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăват, иксĕлми телей сунатпăр. Тавтапуç сана, аннеçĕм, эсĕ пурришĕн. Эпир санпа мухтанатпăр, юрататпăр, хисеплесе сан умăнта пуç таятпăр. Эсĕ пиреншĕн яланах çутă ырă тĕслĕхре.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă хисеплĕ аттемĕре, кукаçине, тăванăмăра – Шупуç ялĕнче пурăнакан **Николай Федорович РОМАНОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн чунтан савăнатпăр, сан пек пулма тăрăшатпăр. Тавах сана ачусене çуратнăшăн, юратнăшăн, çын тунăшăн. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр. Пире хăвăн ылтăн аллусемпе çăматă ăйлакаса тăхăнтартнăшăн тавах сана, аттеçĕм.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, 8 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, шăллĕ, тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**



Хисеплĕрен те хисеплĕ, хаклăран та хаклă, чи юратнă çыннăмăра – Ятман ялĕнче пурăнакан **Екатерина Павловна ИВАНОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Пирĕншĕн вăл анне те, асанне те.

Юрататпăр эпир сана
Чун кăмăлĕ çемçерен.
Çирĕп сывлăх çеç сунатпăр
Çуралнă кун сан çитнĕрен.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕпе кинĕсем, мăнукĕсем тата тăванĕсем.**

# Мĕнпе паллă пулчĕ 2013 çул?

*Чăваш Енре 2013 çулта иртнерĕ чи пĕлтерĕшлĕ мероприятисене палăртнă. Мероприятийĕсем чăннипех те нумай. Рейтинг итогĕсемпе чи пĕлтерĕшлисем шутне çаксем кĕнĕ.*

**1-МĔШ ВЫРĂН**

**Республика кунĕ тата унпа çыхăннă уяв мероприятийĕсем.**

**Июнĕн 20 – 21-мĕшĕсенче Шупашкарта «Раççей регионĕсем – тăнăçлăхран аталану патне» ятпа VI экономика форумĕ иртнĕ.** Унта Раççей Федерацийĕн 27 субъектĕнчен тата чикĕ леш енчи 8 çĕр-шывран делегацисем, Раççей министерствисенчен 1000 çын ытла хутшăннă.

**Июнĕн 21 – 23-мĕшĕсенче «Регионсем – килĕштерсе ĕçлессин чикки çук» ятпа регионсем хушшинчи ХХ выставка ĕçленĕ.** Вăл Раççей Федерацийĕн 13 субъектĕнчен тата Италирен 228 организаци пухнă. Выставкăна 60 пин ытла çын пырса курнă.

**Республика кунĕнче фейерверксен пĕтĕм тĕнчери фестивальне иртнерĕ.** Июнĕн 23 – 24-мĕшĕсенче республикăра пурăнакансемпе хăнасем асра юлмалли çак илемпе киленме пултарнă. Фестивале командăсем Шупашкар, Мускав, Санкт-Петербург хулисенчен, Белоруссирен тата Украинăран хутшăннă.

**Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăл куçĕсем» фестивалĕ.** Фестиваль Раççейĕн 29 регионĕнчи 30 ытла коллектива, пĕтĕмпе 700 ытла çынна пухнă.

**Июнĕн 24 – 25-мĕшĕсенче акционерсен «Акконд-агро фирма» хупă обществинче республикăри «Уй-хир кунĕ – 2013» выставка-демонстраци иртнĕ.** Унта ял хуçалăх производствин хатĕрĕсене туса хатĕрлекен пысăк предприятисем хутшăннă.

**Июнĕн 21-мĕшĕнче Красноармейскинче строительство керамикин «Траковская керамика» – «КЕТРА» заводĕ хута кайнă.** «КЕТРА» – тул енчен купаламалли Европа пахалăхне тивĕçтерекен кирпĕч туса кăларакан республикăри пĕрремĕш завод.

**Июнĕн 15-мĕшĕнче Етĕрне районĕнче сĕт продукчĕсем хатĕрлекен завод ĕçлеме тытăннă.** Талăкра вăл 500 тонна продукци туса кăларма пултарать.

**Пĕтĕм чăвашсен Шупашкарти Акатуй уявĕ.** Вăл чăваш фольклор ушкăнĕсене Тутарпа Пушкăрт Республикисенчен, Хакасипе Ямало-Ненецк автономи округĕсенчен, Украинăран, Белоруссирен, Мускавран, Воротынецран, Мурманскран, Оренбургпа Пенза, Самарăпа Саратов, Ростовпа Ульяновск, Свердловскпа Челябинск облаçĕсенчен, Чăваш Ен хулисемпе районĕсенчен пĕр çĕре пуçтарнă.

**2-МĔШ ВЫРĂН**

**Августăн 18-мĕшĕнче çăлтăрпа пĕрле ирхи зарядка иртнĕ.** Чи массăллă зарядка рекордсен Гиннес кĕнекине кĕме тивĕç пулнă.

**3-МĔШ ВЫРĂН**

**Декабрĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Ен Мускавра физкультурăпа спортри çитĕнӳсемшĕн Раççей Федерацийĕн Спорт министерствин наци премине тивĕçнĕ.** Чи кăткăс та пĕлтерĕшлĕ «Раççей регионĕ» номинацире пирĕн республика пĕрремĕш хут Раççейĕн 82 субъекчĕ хушшинче çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

**4-МĔШ ВЫРĂН**

**Çар ĕçне йĕркелессипе Чăваш Ен Раççейри чи лайăх регион пулса тăнă.** Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Оборона министерствин çĕнтерӳçĕ вымпелне панипе çыхăннă савăнăçлă церемоние хутшăннă.

**5-МĔШ ВЫРĂН**

**Чăваш Ен команди спорт туризмĕ енĕпе çамрăксен Пĕтĕм Раççейри фестивалĕнче çĕнтернĕ.** Команда çӳçинче 25 дистанцире 1-мĕш вырăнсем 16; 2-мĕш вырăнсем 4; 3-мĕш вырăн 1.

**6-МĔШ ВЫРĂН**

**Октябрĕн 26-мĕшĕнче Чăваш наци конгресĕн съезчĕ иртнĕ.** Отчетпа суйлав съездне делегатсемпе хисеплĕ хăнасем Раççей Федерацийĕн 26 субъектĕнчен, çавăн пекех Белоруссирен, Казахстанран, Украинăран, Францирен тата Эстонирен хутшăннă.

**Çавăн пекех кăçалхи пĕлтерĕшлĕ самантсем шутĕнче çаксене те асăнса хăварас пулать:**

• Декабрĕн 2-мĕшĕнче Мускавра тавралăха хӳтĕлессипе иртнерĕ съездра бизнесăн экологи ответлăхĕпе эффективлăхĕн РФ регионĕсем хушшинчи рейтингĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Ăна Интерфакс-ЭРА рейтинг агентстви иртнерĕ. Рейтингра Чăваш Ен пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ.

• 2013 – 2014 çулсенче Чăваш Енĕн газификаци программине пурнăçлама çур миллиард тенкĕ ытла укçа уйăраççĕ. Акционерсен «Газпром» обществин правленийĕн председателĕ Алексей Миллер пирĕн республикăра газификаци программине пурнăçламалли план-графика алă пуснă. Программăпа килĕшӳллĕн «Газпром» ОАО инвестицисем хывнипе республикăра 4 объект хута ярĕç. Çав вăхăтрах Раççейăн хăшпĕр регионĕсене газпа тӳлессипе парăмсем пурри пирки Газпромăн çитес çулхи инвестици программинчен кăларнă.

• Чăваш Ен сведенисене ведомствăсен электрон хутшăнăвĕн системинче (СМЭВ) тестлассине вĕçлесе пырать. Хальхи вăхăтра планланă 24 сведенирен 23-шне (е 98 процент) тестланă. Ку енĕпе Чăваш Ен РФ регионĕсен рейтингĕнче 3-мĕш вырăн йышăнать. Сведенисене тестласси республикăра кăçалхи октябрĕн 26-мĕшĕнче пуçланнă, çак кунсенче вăл вĕçленет.

• Декабрĕн 27-мĕшĕнче Олимп çулăмĕн эстафети Ульяновскран Шупашкара килсе çитнĕ. Чукун çул вокзалĕ умĕнче кăнтăрла Олимп çулăмĕн эстафетине савăнăçлă ларутăрура кĕтсе илнĕ. Эстафета участникĕсене Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламланă. Çав кун республика тĕп хулинче тĕрлĕ мероприятисем чылай иртнĕ. Хула урамĕсемпе факела 163-ĕн йăтса пынă. Маршрут тăршшĕ – 33 км. Савăнăçлă мероприяти 19 сехет иртсен «Олимпийский» тĕп стадионта Олимп çулăмĕн чашăкне чĕртнипе тата фейерверк панипе вĕçленнĕ.

Çав кунах Олимп çулăмĕ Йошкар-Олана çула тухнă.

# Хăтлă, ăшă, перекетлĕ

## Строительство

***2013 çул Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулпа кунти «Малыш» ача сачĕн коллективĕсемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулĕ. Çĕнĕ çул умĕн декабрĕн 25-мĕшĕнче ку объектсенче савăнăçлă лару-тăрура çут çанталăк газĕпе ĕçлекен модульлĕ котельнăйсем хута ячĕç. Вĕсене энерги перекетлессипе энерги эффективлăхĕн районти тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн ĕçе кĕртме май килнĕ. Котельнăйсем хута кайнипе çыхăннă церемоние район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова тата пай специалисчĕсем хутшăнчĕç.***

Çĕнĕ котельнăя хĕрлĕ хăйăва касса малтанах «Малыш» ача садĕнче уçрĕç. Ростислав Николаевич хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Вĕренӳ сферине модернизацилени тата пĕлӳ парассин пахалăхне ӳстерсе пынă май вĕренӳ учрежденийĕсене нормативпа пăхнă шая çитересси актуаллă пулса тăрать. Федераци тата республика шайĕнчи тĕрлĕрен программăсемпе проектсене хутшăнни вĕренӳ учрежденийĕсен пурлăхпа техника шайне ӳстерсе пыма май парать. Çав тĕллевпе кăçал район бюджетĕнчен кăна 15 млн. тенкĕ ытла уйăрнă. Энерги перекетлессин тата энерги эффективлăхĕн программине «Малыш» ача сачĕпе Чуманкасси шкулĕ чи малтисен шутне лекнĕ. Район администрацийĕ пуçлăхĕ Чуманкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче малашне ачасем çуралассин ӳссе пырасса, ача садĕнче пушă вырăнсем пулас маррине шаннине пĕлтерчĕ. Ача сачĕн заведующийĕ Маргарита Иванова калаçа панă тăрăх хальхи вăхăтра садика 74 ача çӳрет. Ача сачĕн уйрăм котельнăйне хута ярасса тахçантанпах кĕтнĕ. Пĕрремĕшĕнчен сивĕ хĕл кунĕсенче ушкăнсенче ăшă пулĕ, тепĕр енчен ăшă мĕн чухлĕ кирлине йĕркелесе тăма, перекетлĕрех пулма май килĕ.

Перекетлĕхĕ вара пĕчĕккех мар. Чуманкасси шкулĕн директорĕ Валерий Васильев ăнлантарнă тăрăх çĕнĕ котельнăй хута яни ăшăшăн тӳлессине 2,5 хут чакарма май парĕ. Халĕ вара ноябрь уйăхĕшĕн кăна 140 пин тенкĕ тӳлеме счет килнĕ.

Ростислав Николаевич çĕнĕ котельнăя хута ярассипе ĕçсене вăхăтра пурнăçланăшăн чикĕллĕ яваплăхлă «ТАА-«Сервис» общество директорне Анатолий Трифонова район администрацийĕн Тав çырăвне пачĕ. Пĕтĕмпе вара садикри котельнăя хута яма 747 пин тенкĕ тăкакланă.

Чуманкасси шкулĕн çĕнĕ котельнăйне уçнă çĕре вара аслисемпе пĕрлех шкул ачисем те пухăннă. Ара шкул класĕсенче «çанталăк» улшăннине чи малтанах вĕсем туйса илме ĕлкĕрнĕ вĕтĕ хха, котельнăй ĕçлеме пуçланăранпа кунта самай ăшăрах.

«Сирĕн шкул классене кирлĕ оборудованипе тивĕçтерессипе тата юсав ĕçĕсем туса иртерессипе чи ăнăçлисенчен пĕри пулса тăрать. Хăвăрăн директорпа тивĕçлипех мăнаçланма пултаратăр. Вăл ертсе пынипе кĕске вăхăт хушшинче çĕнĕ котельнăй туса пĕтерсе хута яма май килчĕ», – палăртрĕ Ростислав Тимофеев. Кăçал шкулсене модернизацилессин программи вĕçленет. Анчах та шкулсенчи юсав ĕçĕсем чарăнса лармĕç. Ку енĕпе районта туса иртернĕ ĕçсен калăпăшĕ пĕчĕк мар, тумалли те пайтах. «Чи кирли – сирĕн пĕтĕмпех лайăх пултăр. Çавна валли вара эпир пĕтĕмпех тăвăпăр», – терĕ Ростислав Николаевич вĕренекенсене каникул кунĕсене лайăх иртерме, вĕренӳ çулне лайăх паллăсемпе вĕçлеме ырă суннă май.

Шкул директорĕ Валерий Васильев котельнăй тăвас пуçарăва ырласа йышăннăшăн тата пулăшса пынăшăн район администрацине тав сăмахĕ каларĕ. Валерий Михайлович каласа панă тăрăх çак ырлăх шкула 3 млн. тенкĕне яхăн кайса ларнă. Çавăн пекех вăл подряд организацийĕ – Сергей Петров ертсе пыракан чикĕллĕ яваплăхлă «Потенциал» общество – ĕçсене оперативлă туса иртернине кăмăллă пулнине пĕлтерчĕ.

Шкул учителĕсен коллективне тата вĕренекенсене çак паллă самантпа район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова та саламларĕ. Пĕрремĕш çур çула вăл ăнăçлă вĕçлеме, хĕллехи каникул кунĕсенче усă сывлăшра активлă канма сĕнчĕ.

Шкулти ырă улшăнусемшĕн пурте хавас пулни пирки шкул управленийĕн канашĕн председателĕ Маргарита Иванова та пĕлтерчĕ.

Чуманкасси шкулĕн пурнăçĕнче юлашки çулсенче ырă улшăнусем пĕрин хыççăн тепри пулса иртнине ашшĕ-амăшĕ те курмасăр пултараймасть. «Малтанах шкул çивиттине улăштарчĕç, кайран пластик чӳречесем лартрĕç, шкул столовăйне капиталлă юсаса çĕнĕ оборудованипе тĕçтерчĕç, халĕ вара модульлĕ çĕнĕ котельнăй туса лартса хута ячĕç. Тавтапуç район администрацине, вĕренӳпе çамрăксен политикин пайне, шкул администрацине», – терĕ вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕ ячĕпе Альбина Васильева.

**Л. ТУКТИНА.**

# ХАЛĂХ ТĔРĔСЛЕВĔ

**Проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.** Кăларăма Н. Николаева ертсе пырать.

## Пĕрремĕш тĕл пулу – уçă калаçу

**Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çынсем хушшинчи çыхăну пирки юлашки вăхăтра нумай калаçатпăр. Иртнĕ кунсенче пирĕн районти ял старостисем, вырăнти депутатсем район администрацийĕн пуçлăхĕпе, пай пуçлăхĕсемпе тата ытти структура представителĕсемпе тĕл пулма Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрне пухăнчĕç. Çакăн пек пĕрремĕш ĕçлĕ тĕл пулу çынсемпе влаç органĕсем хушшинче куçа-куçăн йĕркеленĕ уçă калаçу çуратрĕ.**

«Ял старостисем районта пурĕ 150 çын, вырăнти депутатсем 185-ĕн. Эсир пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни, вырăнсенче лайăх йăласене ытларах сарни сирĕншĕн кăна мар, ял тăрăхĕсенче пурăнакансемшĕн те, районшăн та пĕлтерĕшлĕ», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çак тĕл пулу тĕллевне уçăмлатса.

Ку таранччен ял тăрăхĕсенче иртнĕ район администрацийĕн кунĕсенче, профилактика кунĕсенче, çакна майлă ытти тĕл пулусенче нумай чух халăхăн ыйту çуккине асăрхама тӳр килет. Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов (маларах кайса: асăннă тĕл пулура вăл ял тăрăхĕсенчи активлă çынсене районта йĕркелĕх мĕнле шайрипе паллаштарчĕ, преступленисем ялан тенĕ пек эрех ĕçнинчен пуçланнине палăртрĕ, вăрăултавçăсенчен асăрханмаллине çынсене ăнлантарма ыйтрĕ) калашле çакăн пек лару-тăру çынсен чăнах та пĕтĕмпех лайăххине те е çынна пачах та нимĕн те интереслентерменнине те пĕлтерме пултарать. Чăн лару-тăру мĕнле-ши тесе пуç ватма тивет вара. Çапла çынпа чи çывăх влаç органĕ – вырăнти хăй тытăмлăх органĕ хушшинче ăнланманлăх çуралать те. Апла пулсан пирĕн кашни меллĕ самантпа усă курса хамăрăн ыйтусене уçăмлатма тăрăшмалла, «мăкăр-мăкăр» туса такам çине шаннипе ĕç вырăнтан хускалмĕ.

Старостăсемпе депутатсен вара ыйту сахал мар пулчĕ. Ку лайăх та, мĕншĕн тесен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ăста мĕнле çитменлĕхсем пуррине, халăха мĕн пăшăрхантарнине пĕлсе тăмалла.

Хĕл кунĕсенче çулсене вăхăтра тасатса тăманни кашни çынна канăçсăрлантарать. Атикассипе Мишер ялĕсем хушшинчи çула тасатман пирки ыйту пулчĕ. Çулăн çак пайĕ хут çинче никамăн та мар пулса тухнă, çакна пула нихăш подрядчикăн та ытлашши метрсене тасатма «совĕç» çитеймен. Тĕл пулу хыççăнах çак ыйтăва тӳрех пăхса тухма шантарчĕç. Ильинка ял тăрăхĕнче те «никамăн та мар» пулса юлнă çулсем татах пурри пĕлтерчĕç. Р. Тимофеев çитес вăхăтрах ку ыйтăва та татса пама шантарса каларĕ.

Çулпа çыхăннă тепĕр ыйту – федераци е республика пĕлтерĕшлĕ çулсене тасатса кайнă хыççăн яла кĕмелли çулсем хупланса юлни. Вĕсене камăн тасатса тăмалла, тĕслĕхрен, Москакасси ял тăрăхĕнчи Ахмане ялне кĕрекен çул пăрăнчăкне? Тĕслĕхе шута илсе район администрацийĕ çак çула пăхса тăракан подряд организацине çырупа тухассине пĕлтерчĕ. Пирĕн вара çакăн пек тĕслĕхсене асăрхасан çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсене чĕнме ирĕк пур иккен. Çапла вĕсем пулăшнипе подрядчика хăйĕн тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçлаттарма май пур.

Ял старостисем депутатсем пурăнмалли çурт-йĕр çавăрса хушма хуçалăха аталантарма 40 сотка çĕр илсе çак лаптăкпа мĕнле вăхăтра усă курмаллине те интересленчĕç. Чăнах та çак çĕре, унпа вăхăтра тата тĕллевлĕ усă курмасан (сăмахран, çакăн пек тĕллевпе илнĕ çĕр çинче пӳрт 10 çул иртиччен лартмалла) каялла илмелли йĕрке те пур.

Тепĕр ыйту – ялсенче клубсем хупăнни. Елшиксем те ку «оптимизацие» хăйсем çинче туйнă. Клубсене тытса тăрасси вара укçа-тенкĕпе çыхăннă, çавна пулах пур клуба тытса тăма май çуккине ăнлантарчĕç. Кунпа пĕрлех çав клубсенче çулталăкне икĕ-виçĕ хут мĕн те пулин иртнерни, паллах, йĕркеллĕ пулăм маррине палăртрĕç. Эппин вырăнти влаç культура ĕçченĕсене çапла ĕçлеме «ирĕк панă». Çавăнпах тен çамрăксем ялти клуба мар, Шупашкарти пĕр-пĕр клубри ташă каçне хăвăртрах çитсе килеççĕ. Клубсен ячĕ кăна пулмалла мар, вĕсемпе танах шкулсен спортзалĕсемпе те активлă усă курмалла. Хальлĕхе вара çынсен шухăшлавĕнче, кăмăл-туйăмĕнче хастарлăх палăрсах каймасть-ха.

Урамра каçхи-çĕрлехи вăхăтра çутă çутасси ялсенче мĕнле пулса пынипе те кăсăкланчĕç. Ку ĕçĕн те хăйĕн йĕрки пур. Çакна пурнăçлама кашни ял тăрăхĕн хăйĕн çирĕплетнĕ схеми пулмалла. Ялта пурăнакансен лампочкăна хăш тунката çинче «çутаттарас» килет, çавăнта çирĕплетсе хума юрамасть. Килти счетчик урлă пулсан вара – чару çук.

Ытти ыйтусем те хуравсăр юлмарĕç тĕл пулура. Кунпа пĕрлех районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов социаллă пĕлтерĕшлĕ чирсен хăрушлăхĕ, вĕсене асăрхаттарасси тата диспансеризаци мĕнле иртни çинче чарăнса тăчĕ. Чир-чĕрсен никĕсĕнче, çынсем, вăл шутра çулталăкчченхи ачасем, вăхăтсăр çĕре кĕнинче нумай чух эрех «айăплă» пулнине палăртрĕ. Çакăн пек лару-тăрăва вара чирлисем, сăмахран, туберкулезпа, сипленме килĕшменни татах та хавшатать.

Пушар хăрушлăхĕ пирки калаçнă чух та эрех «айăплă» пулса тухрĕ. Пушар надзор уйрăмĕн сотрудникĕ К. Попов та пушар сăлтавĕсене асăннă чух эрехе «манса хăварма» май çуккине палăртрĕ.

Тĕл пулу ырă самантсемсĕр те пулмарĕ: чи хастаррисене район администрацийĕн Хисеп грамотипе тата район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвĕпе чысларĕç, Мăн Сĕнтĕрти «Картина» ушкăн шăрантарнă юрăсем вара Çĕнĕ çул парнииех пулчĕç.

## Яваплăха туймаллах



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Вениамин Бочкарев – Ильинка ял тăрăхĕнчи Макаçи ялĕн старости. Çак обществăлла ĕçе вăл пĕр-икĕ çул кăна мар пурнăçласа пырать. «Миçе çулне хам та йĕркеллĕ астумастăп – тахçантанпах ĕçлетĕп. Ялти шыв башнине пăхса тăрассине те хам çине илтĕм, – тет вăл. – Ял халăхне пĕрле пухса пысăк ĕç тăвасси çăмăл мар. Малтан çынсем активлăрахчĕ, халĕ ытларахăшĕ кам та пулин туса парассине кĕтет».***

***Кашни çын хăйне майлă, çавăнпах ĕнтĕ башньăри кăлтăксене пула вăхăтлăх шыв пулмасан чи малтан мĕншĕн шыв çук тетпĕр, вырăнта мĕн пулнипе кăсăкланма та вăхăт çук пирĕн – тӳрех таçта «çӳле» çитетпĕр. Башньăна тӳлевсĕрех тăракан Вениамин Бочкарев пеккисене вара хăçан тав сăмахĕ каланине те астумастпăр.***

***«Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăйĕн Çырăвĕнче обществăлла активлăх хавшаккине те палăртмасăр иртмен. Çакна шута илсе пирĕн вырăнти тирпей-илемшĕн те, укçа уйăрмасăр вырăнта туса иртерме май пур ĕççене пурнăçлассишĕн те, вырăнти уявсемшĕн те кашнинех яваплăха туймалла тесе шутлатăп. Халĕ кашни çын хăйĕншĕн пурăнать, анчах та çынсен чун-чĕре илемĕ пулмасан малалла мĕн пулĕ-ха? Çавăнпа пирĕн халăхăн чунлăхне вăратассишĕн те тăрăшмалла», – çапла шухăшлать Вениамин Витальевич.***

## Тавлашура тĕрĕслĕх çуралать

***Декабрĕн 24-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канашăн, ветерансен районти канашĕн, Раççей пенсионерĕсен союзĕн районти уйрăмĕн, куç курманнисен Пĕтĕм Раççейри обществин районти уйрăмĕн, политика репрессийĕсене пула шар курнисен районти уйрăмĕн, Афганистан вăрçин инваличĕсемпе çарта суранланнисен районти уйрăмĕн канашĕн, агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен районти канашĕн членĕсем, обществăлла организацисен пуçламăш уйрăмĕсен председателĕсем, район администрацийĕн структура подразделенийĕсен пуçлăхĕсем пухăнчĕç. Кунта обществăлла канашăн анлă ларăвĕ иртрĕ. Ларăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ.***

Ларăвăн кун йĕркине кĕртнĕ пĕрремĕш ыйтупа – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн май уйăхĕнчи указĕсене пурнăçа кĕртесси районта мĕнле шайра пулнă пирки – район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Елена Чернова пĕлтернисене итлесе сӳтсе яврĕç.

Районта вĕренӳ учрежденийĕсем 28, шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем 14, пуçламăш шкулсем 3, шкул çулне çитменнисен ушкăнĕсем 18. Сăмах чи малтанах вĕсенче вăй хуракансен ĕç укçи шайне ӳстересси пирки пырать. Ку енĕпе палăртнă ĕççене йĕркеллех пурнăçласа пынă. Акă учительсен ĕç укçи вăтамран иртнĕ çул 14334,1 тенкĕпе танлашнă пулсан, халĕ вăл 17974,3 тенкĕне çитнĕ. Воспитательсен шалăвĕ 12 пин тенкĕ ытла.

Кунпа пĕрлех вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас, кабинетсене хальхи çĕнĕ оборудованисемпе тивĕçтерес, шкул столовăйĕсене вăхăт ыйтнă пек хатĕрлесе майлаштарас тĕлĕшпе палăрмăллă ĕçсем пурнăçлама май килнĕ. Чылай çĕрте пысăк юсав ĕçĕсем туса иртернĕ.

Вĕренӳре мал туртăмлисем, пултарулăх ĕçне активлă хутшăнакансем республика Пуçлăхĕн стипендийĕсене тивĕçеççĕ. 2011 çулта кун пеккисем районта 15, иртнĕ çул 18, кăçал 15 яшпа хĕр пулнă.

Районта шкул ачисене хушма вĕренӳ ĕçне хутшăнма анлă майсем туса панă. Çамрăк техниксен станцийĕнче 42 кружока 650 ача, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне 560, ачасен искусство шкулне 300 вĕренекен çӳрет, ачасен пултарулăх суртĕнче 46 кружок ĕçлет, районта çарпа патриотика клубĕсем 5 йĕркеленĕ.

Районăн культура пурнăçĕнче те палăрмăллă улшăнусем пулни сисĕнет. Ситменнине çитес çула Культура çулталăкĕ тесе палăртнă. Çакă та культура ыйтăвĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрма хистет.

Пĕр тĕслĕх кăна. Кăçал Мăн Сĕнтĕрте çĕнĕ информаципе культура центрĕ хута кайнă. Ăна тума федераци бюджетĕнчен 21 млн. тенкĕ уйăрнă. Сăмах май ку вăл юлашки 5 çул хушшинче республикипе хута янă культура центрĕсенчен пĕрремĕш. Федерацин ялсен социаллă аталанăвĕн программине килĕшӳллĕн Шурчари Культура суртĕнче юсав ĕçĕсем пыраççĕ.

Культура учрежденийĕсенче вăй хуракансен ĕç укçи шайне ӳстерсе пыма çул-йĕр карттисем туса хатĕрленĕ. Ĕç укçи виçине вăтам шутпа кăçалхи апрельтен 10,3 процент, июльтен 5,4 процент, октябрьтен 10,4 процент ӳстернĕ, 10700 тенкĕне çитернĕ. 2018 çул тĕлне вăл районти вăтам ĕç укçи шайне çитмелле.

Информаципе культура центрĕсене, тĕслĕх библиотекăсене хальхи оборудованипе, компьютер техникипе тивĕçтерессипе пысăк ĕçсем пурнăçланă. Тĕслĕх библиотекăсенче нумай функциллĕ центрăн гражданcене «пĕр чӳрече» мелĕпе йышăнакан филиалĕсене уснă. Çакă пĕтĕмпех çынсен ыйтăвĕсене май пур таран туллинрех тивĕçтерессипе çыхăннă.

Культура учрежденийĕсем кулленхи ыйтусене татса пама бюджетпа çыхăнман укçа-тенкĕне явăçтарассипе те ĕçлемеççĕ теме çук. Тӳлевлĕ мероприятисем ирттернипе, грантсем выляса илнипе, спонсорсене явăçтарнипе иртнĕ çул 548 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Кăçал çак вăхăта ку хисеп 678 пин тенкĕпе танлашать.

Паллă ĕнтĕ, культура учрежденийĕсенче вăй хуракансем пурте хăйсен тивĕçне ответлăха туйса пурнăçлаççĕ теме çук. Çакна хăйĕн сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев те палăртса хăварчĕ. Çавна май çитес çултан тытăнса ĕç эффективлăхне кура ĕç укçине контракт мелĕпе тӳлесси çине куçма палăртнă. Ĕç укçин база пайĕ пулĕ, ыттине ĕç пахалăхне кура компенсаци шучĕпе тӳлĕç.

Тавлашуллă самантсем те пулмарĕç мар. Обществăлла канашăн ларăвне хутшăннисенчен хăшĕсем культура учрежденийĕсене оптимизацилениpe, ял библиотекине шкул библиотекипе пĕрлештернипе кăмăлсăр пулни курăнчĕ. Анчах нимĕн те тума çук. Ялĕнче пурăнакансем çукпа пĕрех, çитменнине клуб çурчĕ аварийллĕ шутланать, çулталăкне те унта 3 – 4 мероприятисем ытла иртермеççĕ пулсан ăна тытса тăни тĕрĕс-ши? Çав сăлтавпах ĕнтĕ ятарласа йĕркеленĕ комиссисем районти культура учрежденийĕсен юлашки 5 çулхи ĕçне-хĕлне тишкерсе, вĕсенчи лару-тăру аварийллĕ пулнă мар, 10 клуб çуртне хупма йышăннă. Çитменнине ку ыйтăва татса парасси ял тăрăхĕсен полномочийĕнче шутланать. Ку е вăл мероприяти йĕркеленĕ чухне вара информаципе культура центрĕн çынсене ялтан автобуспа илсе каяссине йĕркелесси ансатрах та, тăкаксăртарах та. Кун пирки те ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен шутласа пăхмалла. Çак самантa та палăртса хăварчĕ Ростислав Николаевич.

Район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев вара республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен Патшалăх Канашне янă Çыру çинче чарăнса тăнă май культура чи малтанах çемьерен тытăннине асăнчĕ. Çемье хаклăхĕсем çине пысăкрах тимлĕх уйăрнине кирлĕ. Хальхи вăхăтра çемьери арçынсем ĕçлеме ытларах ытти регионсене тухса çӳрени, ачасем ашшĕсĕр ӳсни йĕркеллĕ пулăм мар. Вырăнсенче арçынсем валли ĕç вырăнĕсем йĕркелесси, тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлесси пирки шухăшласа пăхас пулать. Михаил Васильевич Çырура кун пирки конкретлă асăннă.

Ертӳçĕсемпе ответлă ĕçченсен обществăлла канашăн анлă ларăвне хутшăннисен сĕнĕвĕ пирки шухăшласа пăхмалли те çук мар. Пухусемпе канашлусенче, ларусенче вĕсем чăвашла калаçнине илтме кăмăл тăваççĕ.

Район прокурорĕн пулăшаканĕ Юрий Семенов районта коррупципе кĕрешесси мĕнле пулса пынипе паллаштарчĕ. Шел пулин те, кун пек тĕслĕхсем сахал темелле мар. Кăçал кăна коррупциллĕ ĕç-хĕлпе çыхăннă фактсене 100-е яхăн тупса палăртнă, уголовлă 3 ĕçе судра пăхса тухса айăплисене явап тыттарнă. Должноçри çынсене взятка панă тĕслĕхсем те 3 пулнă.

Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тĕп специалисчĕ Светлана Скворцова тивĕçлисене санаторисемпе курортсене кайма путевкăсем уйăрса парассин йĕрки пирки каласа пачĕ. Хальхи вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 58, вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсем 45, инвалидсем 2361, ĕç ветеранĕсем 5090 çын. Уйăхсерен вĕсем укçа тӳлевĕсем илсе тăраççĕ.

Санаторисемпе курортсене кайса сывлăха çирĕплетме путевка илме заявлени панисен пĕтĕмĕшле черетĕнче çак вăхăта 177 çын, федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен черетĕнче 109 çын. Вĕсем валли кăçал 18 тата 38 путевка уйăрнă. Пĕр путевка хакĕ вăтамран 15827 тенкĕпе танлашнине шута илсен пулăшу шайĕ курăмлă.

Ларура обществăлла канашăн çитес çулхи ĕç планне çирĕплетрĕç, ирĕклĕ халăх дружинисен активлă членĕсене Нина Шишокинăна, Григорий Григорьева, Владимир Федорова Хисеп грамотисемпе хаклă парнесем парса чысларĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# ГОРОСКОП: Лаша çулталăкĕ




**СУРĂХĂН** характерĕ çитес çул лайăх енне улшăнмасть, çакна тăван-хурăнташĕ та асăрхама пуçлать. Ытла та хăвăрт «вĕресе» каякан Сурăхшăн çулталăк çăмăл мар, хăйне майлă иртет. Пурнăçра вĕсем хăйсен саккунĕсемпе йĕркине туса пыраççĕ, тепĕр чух çакăншăн ответ тытма та тивет. Тăван-пĕтенĕн вара çакăн пек çынпа пурăнма хăнăхмалла, чăтăмлă пулмалла. Пурнăçри, хутшăнусенчи йывăрлăхсем çулталăк вĕçленсе пынă май пĕтсе пырĕç.




**ВĂКĂРА** Лаша çулталăкĕ темĕн те вĕрентĕ. Пуринчен ытла вара  ăна асăрханулăх кирлĕ пулĕ. Вăкăр хăйĕн пултарулăхне тĕрлĕ лару-тăрура кăтартма пултарĕ, анчах та кӳрентерекен самантсем те пулаççĕ. Çавăнпа та кашни лару-тăрăва тĕрĕс хаклама пĕлмелле. Хăй лайăх ĕçлекен пулнине Вăкăрăн çулталăк пуçлансанах ĕнентерме тивĕ, çапла вара – йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма та. Çемьепе ĕç хушшинче тĕрĕс «пайланмалла», унсăрăн иккĕшне те çухатма пулать.




**ЙĔКĔРЕШСЕМ** хăйсене мĕн кирлине лайăх туяççĕ. Çулталăк ĕçри ăнăçусемпе, хастарлăхпа тата активлăхпа палăрĕ, анчах та Йĕкĕрешсен аталанăвне çемье ура хурĕ, мĕншĕн тесен вăл çемьене тимлĕх уйăрма пăрахать. Çапла ан пултăр тесен çемьепе карьерăран пĕрне суйлама тивĕ. Малтанхи ĕç-хĕл вара çулталăкĕпех хăйĕн çинчен аса илтерсе чăрмав кӳрет. Пысăк должноçлă ĕçе вырнаçма тата юратнă çынпа хутшăнусем йĕркелеме пулмасть.




**РАКА** çитес çулталăк ку таранччен çитмен лăпкăлăха парнелет. Вĕсем хăйсен вăйне шанма пуçлĕç. Ракăн кирлĕ чух «çук» тесе калама тата çынсене «уйăрса илме» пĕлмелле. Кунсăр  пуçне çемьене тата ĕçе пĕр-пĕринпе пăтраштармалла мар: ăна та, кăна та çителĕклĕ вăхăт уйăрмалла. Лаша Рака пысăк витĕмлĕ те опытлă çынпа паллаштарĕ, тен çак çын пурнăç çулне кăтартса пыраканĕ, ăна аталанма пулăшаканĕ пулĕ. Çакă вара вăхăтран вăхăта Раксене питĕ кирлĕ.




**АРĂСЛАН** çитес çул та хăйĕн çирĕп йĕркинех пăхăнать. Вăл питĕ пуçаруллă та активлă пулĕ, анчах та чеелĕх çитмест. Ĕçре питĕ влаçлă, килте юратнă çынпа питĕ йăваш пулĕç. Арăсланăн ĕçре те, килте те йывăрлăхсем пулмĕç. Çулталăк варринче унăн хăйĕн çирĕплĕхне кăтартса пама тивĕ. Вăхăтра çирĕп пулманни юратнă çынна тата çемьери лăпкăлăха çухатни патне илсе çитерме пултарать.




**ХĔРЕ** çăмăл çулталăк кĕтмест. Вăл ытларах чух чееленмест, çынна шанать, çавăнпа та ӳкĕнмелли пулма пултарать. Хĕрсен ытлашши вĕчĕрхенме те кирлĕ мар. Вĕсем юнашар çынсемпе час-часах сăмахпа тавлашма пултараççĕ, анчах та çакă пĕтĕмпех хăйсене, çемйине хӳтĕлессипе çыхăннă. Çывăх çынсемпе хутшăнусем питĕ лайăх пулмасан та, вĕсем Хĕрĕн юратăвне туяççĕ. Çулталăк улшăнусен вăхăчĕ пулĕ: Хĕр пурăнмалли вырăна, гражданлăха улăштарма, йыш хушма та пултарĕ. Кирек мĕнле улшăну та уншăн усăллă пулмалла.




**ТАРАСАНА** чăннипех те ăнăçу кĕтет. Лашан ыр кăмăллăхĕ, чеелĕхĕ, пуçланă ĕçе вĕçне çити пурнăçлани çитес çул питĕ кирлĕ пулать. Карьера ӳсĕмне тăвассинче хăйсен чи лайăх енĕсене кăтартса пама тӳр килĕ. Тараса килĕшнĕ кирек хăш çынна та хăй майлă çавăрма пултарать, çавăнпах 2014 çул тĕрлĕ «историпе» те пуян пулĕ. Ют çĕр-шывра вара вăл хăйĕн «çуррине» тĕл пулма пултарĕ.




**СКОРПИОНШĂН** обществăлла пурнăçра та, çемьере те çулталăк питĕ тухăçлă пулмалла. Çулталăк пуçламăшĕнчех вăл пурнăç условийĕсем тивĕçтерменрен, çавна пула малалла аталанма май çуккишĕн вĕчĕрхенме тытăнĕ. Чылай ĕçе ăспа мар, чĕре хушнă пек пурнăçламалла пулса тухĕ. Скорпионăн кахалланмалла мар, мĕн пуррине çухатасран шикленсе малалла утма хăрамалла мар. Малтанхи çур çул йĕркесĕр, асарписер çанталăк пек иртет пулсан иккĕмĕш çур çулта лăпкăлăх çитет.




**УХĂÇĂ** Лаша çулталăкĕнче пĕр тикĕс шăвакан пурнăçпа пурăнмасть. Çулталăк тăршшĕпех тĕрлĕ сĕнӳсем пулĕç, анчах та Ухăçă нимĕнле сĕнĕве те йышăнмасть, хăйĕн пурнăçне улăштарма васкамасть. Мĕн пуррине çухатасран шикленсе вăл хăйĕн телейне те алăран вĕçертме пултарать. Юратура Ухăçăн хăйĕн юлташне пăхăнма тивет, çавăнпа та вĕсен малашлăхĕ те юлташĕн сăмахĕ мĕнле пулнинчен килет. Çакăн пек çăмăл мар лару-тăрура Ухăçăн ĕçре те йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Апла пулсан йĕркеллĕ мар хутшăнусене татмалла.




**ТУ КАЧАКИШĔН** çулталăк питĕ усăллă иртĕ: çĕнĕ паллашусем, çĕнĕ хутшăнусем, çĕнĕ ĕç-хĕл. Лаша та Ту качаки пекех асăрханулăхпа, ырă ĕçсем тунипе палăрса тăрать, çавăнпа та Ту качакин çитес çулталăкра алă усса ларма вăхăт пулмĕ – çĕнĕ ӳсĕмсем çĕнсе илмелле. Ту качаки çĕнтерме май çук лару-тăрура та хăйне валли усă тăвĕ. Харпăр хăй пурнăçĕнче те пĕтĕмпех лайăх, çапах та вĕсен юратнă çыннăн чĕрине çĕнсе илессинче çирĕп конкуренци пулĕ.




**ШЫВТĂКАНА** пысăк ăнăçусемех кĕтмеççĕ. Вĕсем хăйсене пушă пек туяççĕ, çакă вара сывлăх çине те, аталану çине те, çывăх çынсемпе хутшăнасси çине те япăх витĕм кӳме пултарать. Шывтăкан хăйне ăнланманнине туять, çакна пула тĕрлĕ проектсем вăхăтлăх чарăнса ларма пултараççĕ. Çакă уйрăмах пултаруллă çынсене пырса тивет – вĕсем кризис патне пырса тухаççĕ. Чунри пушăлăх юнашар юратнă çын пулманнипе те çыхăннă. Çуркунне ку тĕлĕшпе лару-тăру майлашăнма тытăнать, çĕнĕлĕхсен тапхăрĕ пуçланать. Сăмах май каласан ку çĕнĕлĕх çемьеллĕ Шывтăкансене те пырса тивĕ  – вĕсен айккинчи «ĕçĕсем» çиеле тухма пултараççĕ.




**ПУЛĂСЕМ** Лаша çулталăкĕнче çĕнĕ статуслă пулĕç. Хăйсен юратăвне тупнисем пĕрлешме те шухăшлĕç, çемьере тен ача та çуралĕ. Çулталăкĕпех пысăк событисем пулаççĕ. Ку таранччен ĕç çухатма хăранă Пулăсем çитес çул ăна çăмăллăнах улăштарма, хăйĕн ĕçне пуçлама та пултараççĕ. Пулăсем пурăнмалли вырăна та, гражданлăха улăштарассинчен те пăрăнмĕç. Командировкăсем, çул çӳревсем сахал мар пулмалла. Юратакан çынсем вĕсене тимлĕх çителĕклĕ уйăраççĕ.

## Çĕнĕ çула кĕтсе илетпĕр

Çитес çул –  Йывăç кăвак лаша çулталăкĕ. Лаша питĕ хăйне майлă чĕр чун, çавăнпа та 2014 çул кичем иртмĕ. Ĕçри ӳсĕмсем, шăпа «пăрăнчăкĕсем», тĕрлĕ майсем – пĕтĕмпех çителĕклĕ пулать. Ĕçчен Лаша вара кахалланнине килĕштермест.

Лаша çын нумай вырăнсене, хутшăнусене кăмăллать. Апла пулсан Çĕнĕ çула пысăк савăнăçлă йышпа кĕтсе илмелле. Уявăн çуррине вара пĕр-пĕр обществăлла мероприятие  (выставка, концерт...) халаллани лайăх. Уяв каçĕнче пĕрмай шӳтлени, савăнни вырăнлă пулать.

Хваттерте çут çанталăк  тĕсĕсем – симĕспе кăвак – ытларах пулмалла. Алăк çине такана çакса яни те ытлашши мар. Йывăçран тунă савăтсем, лаша ӳкернĕ хатĕрсем сумлă вырăнта пулччăр. Çĕнĕ çул чăрăшĕ çине симĕс-кăвак теттесем ытларах çакма тăрăшмалла, гирляндăсем çутма манмалла мар. Хваттерти кашни пӳлĕмре Çĕнĕ çул çывхарни паллă пулмалла.

Чăрăш айне пĕр-пĕрин патне çырнă шӳтлĕ çырусем хума юрать.

## Капăрланатпăр

Çĕнĕ çулта кăвак, симĕс, фиолет, бирюза, сăрă тĕссем хуçаланаççĕ. Чакăр тĕссем пирки тата синтетика тум çинчен вара Лаша манма сĕнет.

Лаша çӳçе хул пуççи тăрăх янине юрататъ, локонсем туни те илемлĕ пулĕ. Çӳç çумне илемлĕ хăю хушса çивĕт туни те япăх мар. «Лаша хӳри» пирки те ан манăр.

Ытла чакăр тĕссемпе сăрланма та кирлĕ мар – кăна Лаша кăмăлламасть, çут çанталăк мĕн панине кăшт кăна илемлетмелле.

Арçынсен костюм е смокинг тăхăнма кирлех мар – хӳтĕлевçĕ сăнарне вĕсемсĕрех тума пулать. Анчах та эсир пиджакпа галстук суйлатăр пулсан ытла официаллă курăнма ан тăрăшăр. Маскарада кайма шутлатăр пулсан – ковбой пулнине нимĕн те çитмест.

## Сĕтел хатĕрлетпĕр

Сĕтеле пуян хатĕрлĕр, апат-çимĕç пурне те çиттĕр, ытлашшипех пултăр. Тĕрлĕ салатсем тума ан ӳркенĕр. Лаша – курăк çиекен чĕр чун, çавăнпа та сĕтел çинче кашни турилккере петрушка-укроп тата ытти техĕмлĕ курăксем пулни лайăх. Пахча çимĕçпе улма-çырла ытларах лартма тăрăшăр: Лаша пан улми юрататъ, кунпа пĕрлех мандарин пирки ан манăр.

Сĕтел çинче пĕр турилккере те пулин Китай халăхĕн апат-çимĕçĕ пулсан лайăх, сăмахран, роллсем.

Йăлана кĕнĕ «Оливье» салата чăрăш е лаша евĕр туса хурăр. Хĕрлĕ кăшманран та салат тумалла, йӳçĕтнĕ купăста та сĕтел çинчех пулмалла. Крабпа тата кукурузăпа хатĕрленĕ салат та питĕ лайăх çыртмалли шутланать.  Холодец та сĕтел çинче ытлашши пулмĕ. Шуба айĕнчи селедкăна шпрот консервипе ылмаштарса пăхма пултаратăр. Тĕрлĕ бутерброд хатĕрлĕр.

Салатсемпе пĕрлех вĕри апат та хатĕрлемелле. Пулă ăшаламалла, духовкăна кăвакал е чăх лартмалла. Çĕр улми нимĕрĕ хатĕрлеме пултаратăр, маринадланă кăмпа та сĕтеле пуянлатать. Голубцы  Çĕнĕ çул каçхине те, тепĕр кун та чи тутлă апатсенчен пĕри пулĕ.

Çак уявра сĕтел çине пылак апат-çимĕç лартма ан манăр – торт, канфет...

Çĕнĕ çула çирĕп алкоголь напитокĕсемсĕр кĕтсе илме тăрăшăр, лайăх пахалăхлă шампань эрехĕ те çителĕклĕ. Ытлашши ĕçнине Лаша кăмăлламасть, «лаша пек ĕçсе лартнăшăн» вăл хытах кӳренме пултарать.

**Универсал электрон карттăсем**

# Вăхăта çулталăк тăснă

Универсал электрон картта (УЭК) илме кăмăл туни е илес марри пирки унччен заявлени çырманнисене пурне те ăна малтан палăртнă пек 2014 çултан тытăнса мар, 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пама пуçăнаççĕ. Федерацин «Патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессине йĕркелесси çинчен» саккунне кун пирки калакан тӳрлетӳсене Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думи декабрĕн 20-мĕшĕнче кĕртнĕ, электрон карттăпа обязательнăй йĕркепе тивĕçтерессин тапхăрне çулталăк тăснă.

Аса илтеретпĕр, «Универсал электрон картта» проект пĕтĕм Раççейри пекех Чăваш Енре те 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă.

Карттăсем Чăваш Ене федерацин икĕ хушăмĕпе килеççĕ: идентификаци (СНИЛС тата ОМС) тата банк хушăмĕсемпе. 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса карттăсене автоматла майпа регион хушăмне – транспорт хушăмне кĕртсе параççĕ. Транспорт хушăмĕпе Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта кăна мар, пĕтĕм республика территорийĕнчех усă курма май пур. Кăмăл пуррисене картта çине электрон мелĕпе алă пуснине те вырнаçтарса параççĕ. Унпа усă курса патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче услугăсемпе усă курма тата электрон мелĕпе алă пусма май пур.

Çак вăхăта республика территорийĕнче УЭК илме заявленисем йышăнмалли тата картта памалли пунктсене 13 уçнă. Вĕсем Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар, Канашпа Улатăр тата Çĕмĕрле хулисенче, çавăн пекех Муркашпа Шупашкар районĕсенче вырнаçнă.

Карттăна 5 çуллăха тӳлевсĕр параççĕ, заявлени çырса памалла. Хăвăрпа пĕрле паспорт, патшалăх пенси страхованийĕн страховани свидетельстви (СНИЛС), обязательнăй медицина страхованийĕн полисĕ пулмалла.

Декабрĕн 24-мĕшĕ тĕлне республикипе картта илме 13,8 пин заявлени йышăннă, 2,4 пин çын ытла картта хуçи пулса тăнă.

# «Муркашсенчен вĕренмелли пур»

**Чăвашпотребсоюз тытăмĕнчи райпо ертӳçисем çулталăкри ĕçе пĕтĕмлетме тата суту-илӳ ĕçне эффективлăрах тумалли çулйĕрсем пирки калаçма иртнĕ кунсенче Муркаша пухăнчĕç.**

Семинар-канашлу икĕ пайран тăчĕ. Малтанах район администрацийĕн ларусен залĕнче райпо ертӳçисем суту-илĕве эффективлăрах йĕркелемелли мелсене сӳтсе яврĕç, суту-илӳ процесне автоматизацилесси пирки тĕплĕн калаçрĕç. Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В. Павлов Чăвашпотребсоюз тытăмĕн приоритет енĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл пирĕн районти райпосем республикăра тата Раççейре те малтисен йышĕнче пулнине асăнчĕ. Семинарта сĕт хатĕрлессине эффективлăрах йĕркелесси, тавара туянакан патне çитересси тата ытти пирки те калаçу пулчĕ.

Райпосен ертӳçисемпе район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та тĕл пулса калаçрĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл районта пурăнакансем Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăллă пулни-не, вĕсем обществăлла пурнăçа аталантарассине активлă хутшăннине тата райпосем лайăх партнерсем пулнине каларĕ.

Муркаш райповĕ çулсеренех суту-илĕвĕн çĕнĕ объекчĕсене хута ярать, пуррисене вара юсаса çĕнетет. Райпори ертӳçĕсем Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансене меллĕ пултăр тесе лавккасен хăтлăхĕ, унти тавар ассортиментне пуянлатасси çине питĕ пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çавăнпах юхăнса кайнă лавккасем çук та ĕнтĕ. Муркаш райповĕн ӳсĕмлĕ ĕçĕпе райпо ертӳçисем суту-илӳ объекчĕсене çитсе курса ĕненме пултарчĕç.

Суту-илӳ центрĕнче акă хăнасене йăлара усă курмалли тĕрлĕ техника чылай пулнине, ял хуçалăхĕнче усă курмалли мотоблоксем те туянакансене кунтах «кĕтнине», çынсене çак япаласене кредитпа туянма май туса панине ырларĕç. Республикăри чылай райпо кредит мелĕпе ĕçлессине алла илмен иккен.

Ача-пăча лавккин çуртĕнче халăха темĕн тĕрлĕ услугăпа тивĕçтернине хăнасем ăмсансах сăнарĕç. Мĕн кăна çук кунта: атă-



пушмак, ача-пăча валли тавар уйрăмĕсемсĕр пуçне кафе те пур, аптека та, «Добрый охотник» лавкка та, ветаптека та, питĕ лайăх продукци туса хатĕрлекен çĕвĕ цехĕ, «Мечта» илем салонĕ, ку çуртрах çăрасем туса хатĕрлеме пулать, çĕçĕ-пуртă, пăчкă цепĕсене те хăйраса параççĕ, çак çуртрах çĕвĕ изделийĕсене юсама илеççĕ... Пĕтĕмпех пĕр вырăнта – меллĕ. Райпо çынсене манипулятор-кран услугипе те тивĕçтерет.

Кашни суту-илӳ точкинчех хăнасем тавар ассортименчĕ пуяннине, сутуçăсен вашаватлăхне сăнарĕç. «Муркашсенчен вĕренмелли пур-ха пирĕн», – терĕç вĕсем. Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В. Павлов «Бриз» ресторан пек хăтлине Шупашкарта та тупма йывăртарах тесе калани вара Муркаш райповĕн ĕçĕ-хĕлне пĕтĕмĕшле хак пани пулчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Телепрограмма

## с 30 декабря 2013 года по 5 января 2014 года

### ПОНЕДЕЛЬНИК, 30.12

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.50 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» Программа Юлии Меньшовой
18.40 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Поле чудес» Новогодний выпуск 16+
21.00 «Время»
21.30 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига. Финал 16+
0.10 Х/ф «ДЬЯВОЛ НОСИТ PRADA» 16+
2.10 Х/ф «ЗДРАВСТВУЙ, ДЕДУШКА МОРОЗ!»

**РТР**

5.00 Утро России
9.00, 12.00 Х/ф «НЕПУТЕВАЯ НЕВЕСТКА» 12+
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.50 Вести. Дежурная часть
14.45 «Смеяться разрешается»
15.50 Х/ф «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ» 12+
17.40 Х/ф «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ- 2» 12+
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Х/ф «ОДИНОКИЕ СЕРДЦА» 12+
0.50 Х/ф «ВАСИЛЬКИ ДЛЯ ВАСИЛИСЫ» 12+
2.55 Х/ф «ЭЛЬФ» 12+
4.50 Комната смеха

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.25-14.45 Вести-Чувашия
19.40-20.00 Вести-Чувашия

**На канале «Россия 2»**

6.30-7.00 Страна спортивная. Чувашия

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ГОРЮНОВ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЗИМНИЙ КРУИЗ» 16+
1.35 Х/ф «ПРО ЛЮБОВЬ» 16+
3.30 «Лучший город Земли» 12+
4.30 «И снова здравствуйте!» 0+
4.55 Т/с «АДВОКАТ» 16+

### ВТОРНИК, 31.12

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Модный приговор»
10.40 «В наше время» 12+
12.20 Легендарное кино в цвете. «Золушка»
13.40 Х/ф «КАРНАВАЛЬНАЯ НОЧЬ»
15.15 Х/ф «ЕЛКИ» 12+
16.40 Х/ф «ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ МЕНЯЕТ ПРОФЕССИЮ»
18.10 Х/ф «ИРОНИЯ СУДЬБЫ, ИЛИ С ЛЕГКИМ ПАРОМ!»
21.15 Проводы Старого года
23.55 Новогоднее обращение Президента Российской Федерации В. В. Путина
0.00 Новогодняя ночь на Первом
3.00 «Дискотека 80-х»

**РТР**

5.50 Х/ф «ЧАРОДЕИ»
8.35 Х/ф «ДЕВЧАТА»
10.20 «Лучшие песни - 2013» Праздничный концерт из Государственного Кремлевского дворца
11.50 Х/ф «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ- 2» 12+
13.30, 14.20 Х/ф «ЕЛКИ-2» 12+
14.00 Вести
15.40 «Короли смеха» 12+
17.25 Х/ф «ДЖЕНТЛЬМЕНЫ УДАЧИ»
18.55 Х/ф «БРИЛЛИАНТОВАЯ РУКА»
20.35 Х/ф «ТРИ БОГАТЫРЯ»
22.20 «Новогодний парад звезд»
23.55 Новогоднее обращение Президента Российской Федерации В.В. Путина
0.00 Новогодний Голубой огонек - 2014
4.10 Большая новогодняя дискотека

**НТВ**

5.55 Т/с «БРАЧНЫЙ КОНТРАКТ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 Ты не поверишь! 16+
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.55, 13.25 Х/ф «ВОЛКОДАВ» 12+
14.00, 16.20 Х/ф «НАЗНАЧЕНА НАГРАДА» 12+
18.10 Х/ф «АЛМАЗ В ШОКОЛАДЕ» 12+
20.05 Х/ф «ПРАЗДНИК ВЗАПЕРТИ» 16+
21.40 «The Best - Лучшее» Новогоднее шоу на НТВ 12+
23.55 Новогоднее обращение Президента Российской Федерации В.В.Путина
0.00 «The Best - Лучшее» (продолжение) 12+
0.20 «Ээхх, разгуляй!» 16+
3.55 «Давайте мириться!» Новогоднее музыкальное шоу 16+
5.00 «И снова здравствуйте!» Новогодний выпуск 0+

### СРЕДА, 01.01

**ПЕРВЫЙ**

6.00 «Две звезды»
7.20 Легендарное кино в цвете. «Золушка»
8.45 Х/ф «КАРНАВАЛЬНАЯ НОЧЬ»
10.00, 12.00 Новости
10.10 Х/ф «ИРОНИЯ СУДЬБЫ, ИЛИ С ЛЕГКИМ ПАРОМ!»
12.10 «Ирония судьбы, или С легким паром!»
13.25 Х/ф «ИРОНИЯ СУДЬБЫ»
15.20 Х/ф «ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ МЕНЯЕТ ПРОФЕССИЮ»
16.50 «Две звезды» Новогодний выпуск
19.30 Церемония вручения народной премии «Золотой граммофон»
22.30 Х/ф «АВАТАР» 16+
1.05 Мировая премьера. «Шерлок Холмс» 12+
2.35 Х/ф «МУЛЕН РУЖ» 16+
4.35 Х/ф «ХОРТОН»

**РТР**

5.20 «Лучшие песни» Праздничный концерт из Государственного Кремлевского дворца
7.15 Х/ф «ЕЛКИ-2»
9.00 М/ф «Белка и Стрелка. Звездные собаки»
10.40 Х/ф «ДЖЕНТЛЬМЕНЫ УДАЧИ»
12.15 Х/ф «БРИЛЛИАНТОВАЯ РУКА»
14.00 Вести
14.10 «Песня года» Часть первая
16.30 «Юмор года» 12+
18.05 Х/ф «ДЖЕНТЛЬМЕНЫ, УДАЧИ!» 12+
19.55 «Первый Новогодний вечер»
21.20 Х/ф «МОСКВА СЛЕЗАМ НЕ ВЕРИТ» 12+
23.55 Х/ф «НОВОГОДНЯЯ ЖЕНА» 12+
1.35 Х/ф «ЧАРОДЕИ»
4.15 Комната смеха

**НТВ**

5.50 Х/ф «ДЕНЬ ДОДО» 12+
7.15 Х/ф «ВОЛКОДАВ» 12+
9.35 Х/ф «ПРАЗДНИК ВЗАПЕРТИ» 16+
11.10 Х/ф «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ» 16+
13.05 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
17.05 «Большая перемена» Большое музыкальное шоу 12+
19.00 Сегодня
19.20 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
23.00 «Самые громкие русские сенсации: Тайна русского похмелья» 18+
0.50 Х/ф «ЗАХОДИ - НЕ БОЙСЯ, ВЫХОДИ - НЕ ПЛАЧЬ...» 12+
2.35 Х/ф «ЗИМНИЙ КРУИЗ» 16+
4.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧЕТВЕРГ, 02.01

**ПЕРВЫЙ**

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ЧИНГАЧГУК- БОЛЬШОЙ ЗМЕЙ» 12+
8.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДОМ» 16+
10.10 Х/ф «ИРОНИЯ СУДЬБЫ»
12.10 «Ледниковый период 4:Континентальный дрейф»
13.45 Х/ф «ОДИН ДОМА»
15.35 Х/ф «АНЖЕЛИКА, МАРКИЗА АНГЕЛОВ» 12+
17.30 «Угадай мелодию» 12+
18.00 «Поле чудес» 16+
19.10, 21.15 Музыкальный фестиваль «Голосящий КиВиН» 16+
21.00 «Время»
22.45 «Красная звезда» представляет «20 лучших песен года» 16+
0.45 Х/ф «КРЕПКИЙ ОРЕШЕК» 16+
3.00 Х/ф «В РАЮ КАК В ЛОВУШКЕ» 12+
4.45 «В наше время» 12+

**РТР**

5.05 Х/ф «СЕМЬ СТАРИКОВ И ОДНА ДЕВУШКА»
6.35 Х/ф «СНЕГ НА ГОЛОВУ» 12+
8.25 Х/ф «ДОЯРКА ИЗ ХАЦАПЕТОВКИ» 12+
10.30 Х/ф «ДЖЕНТЛЬМЕНЫ, УДАЧИ!» 12+
12.30, 14.10 Х/ф «МОСКВА СЛЕЗАМ НЕ ВЕРИТ»
14.00, 20.00 Вести
15.35 «Песня года» Часть вторая
18.05 «Юмор года» 12+
20.20 «Второй Новогодний вечер»
22.05 Х/ф «БЕДНАЯ LIZ» 12+
0.10 «Живой звук»
1.40 Х/ф «СТРЕЛЯЙ НЕМЕДЛЕННО!» 12+
3.20 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
4.45 Комната смеха

**НТВ**

6.15 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20 Их нравы 0+
8.55 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
10.20 Т/с «ВРАЧ» 12+
13.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
17.05 «Большая перемена» 12+
19.20 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
23.00 «Вдоль по памяти» Юбилейный концерт Александра Новикова 16+
1.00 Х/ф «ОПЯТЬ НОВЫЙ!» 16+
2.55 Квартирный вопрос 0+
3.55 Дикий мир 0+
4.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ПЯТНИЦА, 03.01

**ПЕРВЫЙ**

5.45, 6.10 Х/ф «СЛЕД СОКОЛА» 12+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
8.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДОМ» 16+
10.10 Х/ф «МОРОЗКО»
11.40 «Ералаш»
12.10 «Ледниковый период 3: Эра динозавров»
13.50 Х/ф «ОДИН ДОМА 2»
16.00 Х/ф «ВЕЛИКОЛЕПНАЯ АНЖЕЛИКА» 12+
18.00 «Кто хочет стать миллионером?»
19.10 «Ку! Кин-дза-дза» легендарного фильма Георгия Данелии 12+
21.00 «Время»
21.15 Т/с «ТРИ МУШКЕТЕРА» 12+
23.00 Х/ф «ШЕРЛОК ХОЛМС: ЭТЮД В РОЗОВЫХ ТОНАХ» 12+
0.50 Х/ф «КРЕПКИЙ ОРЕШЕК 2» 16+
3.00 Х/ф «ЗУД СЕДЬМОГО ГОДА» 16+
4.40 «В наше время» 12+

**РТР**

5.15, 11.35 Т/с «ДОЯРКА ИЗ ХАЦАПЕТОВКИ. ВЫЗОВ СУДЬБЕ» 12+
11.00, 14.00, 20.00 Вести
12.30 Праздничный концерт
14.10 Х/ф «ЗОЛОТЫЕ НОЖНИЦЫ» 12+
16.00 «Измайловский парк» Большой юмористический концерт 16+
17.50 Х/ф «СЕРЕБРИСТЫЙ ЗВОН РУЧЬЯ» 12+
20.20 Х/ф «ДАША» 12+
0.05 «Живой звук»
1.40 Х/ф «НОВОГОДНЯЯ ЗАСАДА» 12+
3.25 Горячая десятка 12+
4.20 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»

**ЧУВАШИЯ**

11.15-11.35 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
19.40-20.00 Для вас, любимые. Концерт по заявкам

**НТВ**

6.15 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20 Их нравы 0+
8.55 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
10.20 Т/с «ВРАЧ» 12+
13.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
17.05 «Большая перемена» 12+
19.20 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
23.00 «Сегодня. Вечер. Шоу» 16+
0.55 Х/ф «ДЕНЬ ДОДО» 12+
2.40 «Дачный ответ» 0+
3.40 Ты не поверишь! 16+
4.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### СУББОТА, 04.01

**ПЕРВЫЙ**

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «АПАЧИ»
8.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДОМ» 16+
10.10 Х/ф «ГУСАРСКАЯ БАЛЛАДА»
12.10 «Ледниковый период 2: Глобальное потепление»
13.45 Х/ф «РОМАН С КАМНЕМ» 16+
15.45 Х/ф «АНЖЕЛИКА И КОРОЛЬ» 12+
17.45 «Угадай мелодию» 12+
18.10 «Кто хочет стать миллионером?»
19.15 Х/ф «ZОЛУШКА» 16+
21.00 «Время»
21.15 Т/с «ТРИ МУШКЕТЕРА» 12+
23.00 Х/ф «ШЕРЛОК ХОЛМС: СЛЕПОЙ БАНКИР» 12+
0.50 Х/ф «КРЕПКИЙ ОРЕШЕК: ВОЗМЕЗДИЕ» 16+
3.00 Х/ф «ДЖЕНТЛЬМЕНЫ ПРЕДПОЧИТАЮТ БЛОНДИНОК» 16+
4.30 Х/ф «ДЕЛЬГО»

**РТР**

5.45 Т/с «ДОЯРКА ИЗ ХАЦАПЕТОВКИ. ВЫЗОВ СУДЬБЕ» 12+
9.00 Т/с «ДОЯРКА ИЗ ХАЦАПЕТОВКИ - 3» 12+
10.25 Субботник
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.15, 14.10 Т/с «УРАЛЬСКАЯ КРУЖЕВНИЦА» 12+
15.05 Шоу «Десять миллионов»
16.10 «Кривое зеркало» Театр 16+
18.05 Х/ф «СУДЬБА МАРИИ» 12+
20.20 Х/ф «САЛЯМИ» 12+
0.00 «Живой звук»
1.25 Х/ф «НЕВЕСТА» 12+
3.00 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
5.30 Комната смеха

**НТВ**

6.15 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.50 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
10.20 Т/с «ВРАЧ» 12+
13.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
17.05 «Большая перемена» 12+
19.20 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
23.00 «Суббота. Вечер. Шоу» 16+
0.10 «Тодес. Юбилейный концерт» 12+
1.50 Х/ф «ВРАЧА ВЫЗЫВАЛИ?» 16+
3.45 Ты не поверишь! 16+
4.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ВОСКРЕСЕНЬЕ, 05.01

**ПЕРВЫЙ**

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «БРАТЬЯ ПО КРОВИ» 12+
8.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДОМ» 16+
10.10 Х/ф «СТАРИК ХОТТАБЫЧ»
11.45 «Ералаш»
12.10 «Ледниковый период»
13.35 «Ледниковый период: Гигантское Рождество»
14.00 Х/ф «ЖЕМЧУЖИНА НИЛА» 16+
16.00 Х/ф «НЕУКРОТИМАЯ АНЖЕЛИКА» 12+
17.35 «Кто хочет стать миллионером?»
18.40 «Легенды «Ретро FM» Юбилейный выпуск
21.00 «Время»
21.20 Т/с «ТРИ МУШКЕТЕРА» 12+
23.10 Х/ф «ШЕРЛОК ХОЛМС: БОЛЬШАЯ ИГРА» 12+
1.05 Мировая премьера. «Шерлок Холмс: Знак трех» 12+
2.45 Х/ф «КАК ВЫЙТИ ЗАМУЖ ЗА МИЛЛИОНЕРА»
4.15 Х/ф «КОВБОЙШИ И АНГЕЛЫ» 12+

**РТР**

5.55 Т/с «ДОЯРКА ИЗ ХАЦАПЕТОВКИ - 3» 12+
9.50 «Рождественская «Песенка года»
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.15, 14.10 Т/с «УРАЛЬСКАЯ КРУЖЕВНИЦА» 12+
15.05 «Кривое зеркало» Театр 16+
17.35 Х/ф «ЛЮБОВЬ ДЛЯ БЕДНЫХ» 12+
19.30, 20.20 Х/ф «СИЛА ВЕРЫ» 16+
23.50 «Живой звук»
1.15 Х/ф «СНЕГУРОЧКА ДЛЯ ВЗРОСЛОГО СЫНА» 12+
2.50 Х/ф «СОЛОМЕННАЯ ШЛЯПКА»
5.10 Комната смеха

**НТВ**

6.15 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
10.20 Т/с «ВРАЧ» 12+
13.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
17.05 «Большая перемена» 12+
19.20 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
23.00 «Сегодня. Вечер. Шоу» 16+
0.50 «Самые громкие русские сенсации: Бриллианты в шампанском» 16+
1.45 Х/ф «ОЧКАРИК» 16+
3.40 Ты не поверишь! 16+
4.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+




**Постановление главы Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 25 декабря 2013 года № 9**

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Федерального Закона РФ от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района п о с т а н о в л я ю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта«Об изменении разрешенного использования земельного участка» 13 января 2014 года в 15 часов 00 минут в МБУК «Юнгинский информационно-культурный центр» по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Юнга, улица Центральная, дом 5, корпус 1 (проект прилагается).

2. Настоящее постановление подлежит опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики В.В.Фомин.**

**Проект муниципального правового акта**

**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:080801:0029 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: участок находится примерно в 120 м по направлению на юго-запад от ориентира жилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, выс. Коминтерн, ул. Коминтерна, д.8 общей площадью 1192 кв.м. с «для ведения огородничества» на «для индивидуального жилищного строительства».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 13 января 2014 года до 15.00 часов.

**Срочно продается внедорожник «Рекстон-2» «Санйонг», пробег 39 т. км. В эксплуатации с 2012 г. Рамный. Комплектация – комфорт. Состояние отличное. Цена – 890 т. руб. Тел.: 8-960-306-18-83.**

**Срочно! Вахта до Нового года! Требуются в Москву и МО: фасовщицы-упаковщицы, грузчики-комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – бесплатное. Вахта: 20/30/45/ дней. З/п 27 000–35 000 руб. Тел: 8(8352)36-42-92, 36-42-94. 1-2.**

**Администрация Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, доля в праве 11/518 муниципального образования Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:150801:1.**

**Заявления принимаются в течении шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Ярославка, ул. Центральная, д. 5.**

* * *

**Администрация Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, доля в праве 74/677 муниципального образования Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:130501:2.**

**Заявления принимаются в течении шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Ярославка, ул. Центральная, д. 5.**

